24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
19
ЫТЛАРИКУН
194 (5909) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Аслă державăсен Гитлера хирĕç тунă фрончĕ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ шĕрле янă послани пĕтĕм тĕнчипе политикăллă пысăк вырăн йышăнакан документ пулса тăрать. Çак документ тата вăл палăртакан практикăллă мероприятисем пĕтĕм тĕнчене хăйне пăхăнтарса чуралантарма тăрăшакан гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк роль йышăнса тăрĕç. Вăл документ, çавнашкалах тата, нацистла Германие хирĕç Совет Союзĕнчи халăхсем геройла кĕрешни историллĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине США-па Англи халăхĕсем йышăннине кăтартса тăрать, ăна вара çакăнпа çирĕплетсе янă: президент Рузвельт тата премьер-министр Черчилль Мускавра виçĕ çĕршыв представителĕсен пысăк авторитетлă совещанине пухма сĕнчĕç, çав совещанире, гитлерла Германие татăклăнах çĕнтерес тесе, Совет Союзĕн, Англин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен пĕрлехи ресурсисене валеçес ыйтăва татса памалла.

Виçĕ çĕршыв хушшинчи: Совет Союзĕ, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслăха аталантарас ĕçре çĕнĕ тапхăр пуçланать тесе, пĕр ӳстермесĕрех калама пулать. Çав туслăх гитлерла тиранне пĕтерес, халăхсене çав пысăк хăрушлăхран хăтарас тĕллевпе пурнăçа кĕртес енĕпе пулса пырать. Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳри конкретлă та практикăллă чылай мерăсене пĕрле туса хатĕрлесе çийĕнчех пурнăçа кĕртни тата çак аслă кĕрешӳре Совет Союзĕ уйрăмăнах пысăк вырăнта тăнине йышăнни çак çĕнĕ тапхăран характерлă тата тĕп палли пулса тăрать.

США президенчĕ Рузвельт тата Великобритани премьер-министрĕ Черчилль пĕрле Сталин юлташ патне послани яни çинчен калакан хыпара ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Çак хыпар Гитлера хирĕçле фронтăн тусĕсен чĕрисене савăнтарчĕ тата Гитлерпа унăн юнлă хӳрешкисен лагерĕнче пăтрашу кăларса ячĕ. Туслă çĕршывсенчен Мускавра илнĕ малтанхи хыпарсем виçĕ державăн туслăхĕнчи çĕнĕ тапхăр, нимĕçсен асса кайнă фашистла захватчикĕсене хирĕç пĕрлешсе практикăлла, конкретлă кĕрешесси патне çавăрăну пысăк вырăн йышăнса тапхăр шутне тепысăк вырăн йышăнса тăнине паллă турĕç те ĕнтĕ. Лондонри радио çакна паллă тăвать: Сталин патне янă посланине Рузвельтпа Черчилль калаçăвĕнче тата вĕсем йышăннă решенире пулнă реализма кăтартса паракан документсенчен пĕри пулать тесе хаклămалла.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле Сталин юлташ патне послани гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен хăватлă вăйсем татах та пĕтĕçнине, ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕрлĕх фрончĕ малалла сарăлнине тата тĕрекленнине кăтартса парать.

Совет войскисен вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк паттăрлăхĕпе хастарлăхĕ, юнлă Гитлер пирĕн тăван çĕршыв çине кăларса янă нимĕçсен урса кайнă фашистла кĕтĕвĕсене хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ паттăрăн кĕрешнипе пĕтĕм тĕнчери халăхсене, малта пыракан пĕтĕм этемлĕхе хаваслантарать. Совет Союзĕ паттăрăн та çирĕппĕн хирĕç тăнипе çавăн пек хавасланни, гитлеризма çĕнтерес ĕçре пирĕн кĕрешӳ халăхсен пурнăçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине йышăнни США президенчĕ Рузвельт тата Великобритани премьер-министрĕ Черчилль пĕрле янă посланире те палăрать.

Виçĕ аслă державăсем хушшинчи — СССР, США тата Великобритани хушшинчи туслăха малалла активлаштарасси тата вырлăн палăрса тăрать. Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани Совет Союзне анлă пулăшу пама хатĕр тăни тата халех ĕнтĕ пулăшма пуçлани çинчен пĕлтернине, Рузвельт—Черчилль посланинче кăтартнă тăрăх, фашистла çарсене хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешме кирлĕ вăрçă материалĕсене Совет Союзне тăратас тесе, Англипе Америка порчĕсенчен тиенĕ пароходсем нумайĕшĕ тухни тата ыттисем килес çывăх вăхăтрах тухасси çинчен пĕлтернине совет халăхĕ пысăк кăмăлпа кĕтсе илет.

СССР, Великобритани тата США хушшинчи анлă та нумай енлĕ туслăх,—унăн паха перспективисем çитес çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕрĕç,—гитлерла Германие питĕ хăватлăн çапать, виçĕ аслă держава пĕр-пĕрин хушшинче çакăн пек туслăх тума килĕшни гитлерла Германине политика тĕлĕшпе питĕ пысăк поражени кӳчĕ. Этемлĕхе Гитлер хăрушлăхĕнчен хăтарассишĕн кĕрешекенсен речĕсем тачăрах та тачăрах пĕтĕçсе пыраççĕ, фашистла вăрă-хурахсен йăвине тĕнчери чи аслă державăсен тата вĕсен союзникĕсен халама çук пысăк хĕçпăшаллă вăйĕсен тимĕр ункине çавăрса илеççĕ.

Юнлă Гитлерăн планĕсем пĕрин хыççăн тепри арканса каяççĕ. Гитлер тата унăн генералĕсем Совет Союзне хирĕç çиçĕм пек хăвăрт вăрçă туса ирттерсе, кайран Англи çине пĕтĕм вăйпа пырса тапăнма тата Америкăри çĕршывсем тĕлĕпне хăйсен захватчикла планĕсене пурнăçа кĕртме шутланă. Совет Союзĕ паттăрăн хирĕç тăни çах шухăшсене ӳпĕнтерсе, сапаласа ячĕ. Фашистла тискер выльăха питĕ хытă çапнă. Фашистсен чи лайăх дивизийĕсем, пиншер танкĕсемпе самолечĕсем совет уйĕсенче хăйсен вилĕм шăтăкĕсене тупрĕç. Тăшмана хавшатнă, анчах вăл халĕ те вăйлă-ха. Вăл хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухнă тата малалла кĕрсе çĕнтерӳ тума пĕтĕм вăйран тапаçланать.

Пăрлă океанран Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан пысăк фронтра Гитлер ухмаха ернĕ тискер кайăк пек вĕтеленет, çĕнĕрен те çĕнĕ çарсене çапăçăва кĕртсе ярать. Вăл çĕнĕрен те çĕнĕ авантюрăсем хатĕрлет. Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче интригăсемпе провокацисен атмине тĕртет, Хĕвеланăç Африкăна кĕрсе кайса Америка çĕршывĕсем çине тапăнмалли плацдарм тумашкăн пĕр ирĕксăр юлнă Виши правительствине хĕсет. Иртĕхсе кайнă тата аманнă тискер кайăкăн положенийĕ мĕнтери хăрушă тата шанчăксăр, вăл хăй те çаван чухлĕ хăрушă.

Нумай вăхăт хушши тата çине тăрсах кĕрешмелле пулать-ха, вăйсене питĕ хытă чăмăртамалла пулать, жертвăсем те нумай пулĕç. Гитлеризма хирĕç тăракан фронтăн пур участникĕсем те ăна питех те уçăмлăн ăнланаççĕ. Çак шухăша США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле çырнă посланире те палла тунă: «Хальхи вăхăтра пирĕн пысăкрах тапхăра пыракан политикăна сутсе-явасси çине çавăрăнса пăхмалла, мĕншĕн тесен пирĕн мĕнпур ĕçсене тата жертвăсене харама каймалла мар тăвакан пĕтĕмĕшлĕ çĕнтерӳ тăвиччен питех те вăрăм та йывăр çула утса тухмалла-ха».

Фашистсен политикин стратеги тĕлĕшĕнчи вилĕмле йăнăшĕсенчен пĕри—гитлерла Германин икĕ тата ытларах та фронтра вăрçма тивни пулать. Халĕ пур фронтсем те пĕр пекех активлă мар-ха. Анчах, США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ тĕрĕс кăтартнă тăрăх, «вăрçă нумай фронтсенче пырать тата вăл пĕтиччен ытти фронтсенче те вăрçă ĕçĕсем пуçланма пултараççĕ». Гитлерла хăрушлăха хирĕç кĕрешекен державăсен задачи—пур фронтсенче те тăшмана хирĕç тăкăлăнах кĕрешмелле тăвасси, гитлеризма хирĕçле фронтăн пур участокĕсенче те унăн боецĕсем пур енчен те хĕçпăшалланнă пулмалла тăвасси, противника пĕтерсе хумаллах çирĕп çапма хатĕр тăрасси пулать.

Гитлерла Германие хирĕç ăна татăклăн çĕнтеричченех кĕрешме çирĕп решени йышăннă виçĕ аслă державăн ресурсĕсем иксĕлми пысăк. Кĕрешӳ пысăк тата йывăр пулни çак ресурссемпе чи лайăх, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухса усă курма хушать. Пулса иртекен çапăçусен çывĕхлĕхĕ тата пысăкккĕшĕ çак пробкемăна ним тăхтаса тăмасăр татма хушать. Чи малта тăракан задача—вăрçă хатĕрĕсене Англие паниле пĕрлех, тĕп фронта, урăхла каласан, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçăн фронтне парса тăмалла тăвасси пулать, мĕншĕн тесен нимĕçсен фашистла çарĕсем хальхи вăхăтра тĕп вăя Совет Союзне хирĕç тăратнă.

Çакăн пек обстоятельствăсем пулнă чух, Мускавра ССР Союзĕн, США-н тата Англин пысăк полномочи панă представителĕсем хутшăнакан канашлăва пухни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле янă посланире çакăн пек канашлу пухма сĕннине Совет Правительстви питех те кăмăллăн йышăнчĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен çулпуçĕ, Совет Правительствин пуçлăхĕ Сталин юлташ США тата Англи посолĕсене панă хăйĕн ответĕнче президент Рузвельта тата премьер-министр Черчилле вĕсем гитлерла Германие хирĕç, ирĕклĕхе юратакан халăхсем çулпуçĕ, Совет Правительствин ячĕпе чĕререн тав турĕ. Сталин юлташ чĕртаварпа вооруженисене валеçес тĕлĕшпе Мускавра виçĕ çĕршыв представителĕсен канашлăвне пухма сĕнине саламлани çинчен пĕлтерчĕ.

Мускаврă ирттерме палăртнă канашлу,—унта тăшмана хирĕç кĕрешессин пĕрлехи планĕсене хатĕрлемелле пулать,—этемлĕхе нацистсен тиранийĕнчен хăтарас тĕллевпе пурнăçа кĕртес ĕçре СССР, США тата Англи пĕр-пĕринпе тухăçлăн хутшăнса ĕçлессине, паллах ĕнтĕ, татах та ытларах тĕреклетет. СССР, Великобритани тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсем тăшмана хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешни ытларах та ытларах конкретлă тата ĕçлĕ формăсене йышăнать. Çак кĕрешӳ темле йывăр пулсан та, çĕнтерӳ патне çитес çул темле йывăр пулсан та, ирĕклĕхе юратакан халăхсем пĕр пулса ĕçлени çĕнтерӳ тăватех. Тăшмана çапса аркатăпăр, çĕнтерӳ пирĕн алăра пулĕ!

(«ПРАВДА» хаçатăн августăн 17-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противник войскисене пыра-пыра çапнă тата унăн аэродромĕсенчи авиацине атакăланă.

Тĕрĕс шута илнĕ даннăйсем тăрăх, августăн 14-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек—21 самолет мар, 26 самолет пĕтерсе тăкнă.

Августăн 15-мĕшĕнче нимĕçсенне 29 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 24 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çаран Болдин юлташ командир пулса ертсе пыракан часĕ противник тылĕнче шалта çирĕм кун хушши кĕрешнĕ, хăйĕнчен йышлăрах противника хирĕç пĕр хутчен мар çапăçнă. Часть кĕрешсе пыракан çул çинче фашистсен виллисем, нимĕçсен çĕмĕрлĕсе юрăхсăра тухнă орудийĕсем, танкĕсем, тата чугунçул составĕсем йăваланса выртнă. Боецсем хăйсен боеприпасĕсене расходласа цĕтернĕ хыççăн, вĕсем тăшмана хирĕç çапăçусенче тăшманран туртса илнĕ хĕçпăшалсемпех çапăçнă.

Çирĕммĕш кунĕнче Болдин юлташ отрячĕ Хĕрлĕ Çаран тĕп часĕсем сумне пырса пĕрлешнĕ. Çавăн пек пырса пĕрлешиччен малтан Болдин юлташăн часĕ Хĕрлĕ Çаран Н-ски стрелковăй дивизийĕне пĕрле нимĕç войскисене хирĕç пысăк çапăçу туса ирттернĕ. Çапăçу пирĕн бомбардировщиксем сывлăшран атакăланипе пуçланнă. Ирхине 6 сехетре совет самолечĕсем тăшман чуçĕ çине пĕрремĕш бомбăсем кайса пăрахнă. Нимĕçсен танкĕсем мĕнле пĕтнине тата противникăн орудийĕсем стройран тухнине Болдин юлташ наблюдательнăй пунктран лайăх курса тăнă. Ăнăçлăн пăрахнă пĕр бомба боеприпассем тиенĕ автомашинăсене взрыв туса аркатса тăкнă. Горючи тултарнă цистернăсене сийĕнчех çулăм хыпса илнĕ. Противник вырнаçса тăракан пĕтĕм района тĕтĕм хупăрласа илнĕ. Н-ски стрелковăй дивизин танкĕсем çапăçăва кĕме йĕркеленсе тăрса, атака тума пуçланă. Çав вăхăтра Болдин отрячĕ тăшмана тылран пырса çапнă. Фашистсен часĕсене ик енчен хĕстерсе лартнă, вĕсен ретĕнче паника пуçланса кайнă. Красноармеецсем штыксемпе атакăласа нимĕçсене çĕмĕрсе тăкнă. Вăрман хĕрринче, çырмара тата çухсем çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем, тăшман танкĕсен, мотоциклĕсен юлашкийĕсем, моторизованнăй артиллери ванчăкĕсем тата нимĕн йĕркесĕр пăрахса хăварнă пулеметсемпе винтовкăсем йăваланса выртнă.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç енчи О. хулин районĕнче совет войскисемпе нимĕç войскисем хушшинче 16 сехет хушши пысăк çапăçу пынă. Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра советăн йывăр артиллери батарейисем тĕлне фашистла бомбардировщиксен группи пырса тухнă. Ларионов капитан ертсе пыракан совет истребительĕсен эскадрильи фашистла летчиксене хирĕç вĕрсе çĕкленсен, вĕсем каялла çавăрăнса кайнă, пĕр бомба та пăрахма ĕлкĕреймен. Совет летчикĕсем нимĕçсене вырăнти халăхран продуктсене ним хăвармиччен туртса илнĕ. Чылай ялсенче нимĕç воякисен выçă кĕтĕвĕсем хресченсен пахчисене пĕтĕмпех çаратса кайнă, çиме май пур пахча-çимĕçсене пурне те кăларса кайнă.

Нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç халăх представителĕсем хутшăнакан канашлăва пухни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле янă посланире те палăрать.

Виçĕ аслă державăсем хушшинчи — СССР, США тата Великобритани хушшинчи туслăха малалла активлаштарасси тата вырлăн палăрса тăрать. Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани Совет Союзне анлă пулăшу пама хатĕр тăни тата халех ĕнтĕ пулăшма пуçлани çинчен пĕлтернине, Рузвельт—Черчилль посланинче кăтартнă тăрăх, фашистла çарсене хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешме кирлĕ вăрçă материалĕсене Совет Союзне тăратас тесе, Англипе Америка порчĕсенчен тиенĕ пароходсем нумайĕшĕ тухни тата ыттисем килес çывăх вăхăтрах тухасси çинчен пĕлтернине совет халăхĕ пысăк кăмăлпа кĕтсе илет.

СССР, Великобритани тата США хушшинчи анлă та нумай енлĕ туслăх,—унăн паха перспективисем çитес çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕрĕç,—гитлерла Германие питĕ хăватлăн çапать, виçĕ аслă держава пĕр-пĕрин хушшинче çакăн пек туслăх тума килĕшни гитлерла Германине политика тĕлĕшпе питĕ пысăк поражени кӳчĕ. Этемлĕхе Гитлер хăрушлăхĕнчен хăтарассишĕн кĕрешекенсен речĕсем тачăрах та тачăрах пĕтĕçсе пыраççĕ, фашистла вăрă-хурахсен йăвине тĕнчери чи аслă державăсен тата вĕсен союзникĕсен халама çук пысăк хĕçпăшаллă вăйĕсен тимĕр ункине çавăрса илеççĕ.

Юнлă Гитлерăн планĕсем пĕрин хыççăн тепри арканса каяççĕ. Гитлер тата унăн генералĕсем Совет Союзне хирĕç çиçĕм пек хăвăрт вăрçă туса ирттерсе, кайран Англи çине пĕтĕм вăйпа пырса тапăнма тата Америкăри çĕршывсем тĕлĕпне хăйсен захватчикла планĕсене пурнăçа кĕртме шутланă. Совет Союзĕ паттăрăн хирĕç тăни çах шухăшсене ӳпĕнтерсе, сапаласа ячĕ. Фашистла тискер выльăха питĕ хытă çапнă. Фашистсен чи лайăх дивизийĕсем, пиншер танкĕсемпе самолечĕсем совет уйĕсенче хăйсен вилĕм шăтăкĕсене тупрĕç. Тăшмана хавшатнă, анчах вăл халĕ те вăйлă-ха. Вăл хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухнă тата малалла кĕрсе çĕнтерӳ тума пĕтĕм вăйран тапаçланать.

Пăрлă океанран Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан пысăк фронтра Гитлер ухмаха ернĕ тискер кайăк пек вĕтеленет, çĕнĕрен те çĕнĕ çарсене çапăçăва кĕртсе ярать. Вăл çĕнĕрен те çĕнĕ авантюрăсем хатĕрлет. Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче интригăсемпе провокацисен атмине тĕртет, Хĕвеланăç Африкăна кĕрсе кайса Америка çĕршывĕсем çине тапăнмалли плацдарм тумашкăн пĕр ирĕксăр юлнă Виши правительствине хĕсет. Иртĕхсе кайнă тата аманнă тискер кайăкăн положенийĕ мĕнтери хăрушă тата шанчăксăр, вăл хăй те çаван чухлĕ хăрушă.

Нумай вăхăт хушши тата çине тăрсах кĕрешмелле пулать-ха, вăйсене питĕ хытă чăмăртамалла пулать, жертвăсем те нумай пулĕç. Гитлеризма хирĕç тăракан фронтăн пур участникĕсем те ăна питех те уçăмлăн ăнланаççĕ. Çак шухăша США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле çырнă посланире те палла тунă: «Хальхи вăхăтра пирĕн пысăкрах тапхăра пыракан политикăна сутсе-явасси çине çавăрăнса пăхмалла, мĕншĕн тесен пирĕн мĕнпур ĕçсене тата жертвăсене харама каймалла мар тăвакан пĕтĕмĕшлĕ çĕнтерӳ тăвиччен питех те вăрăм та йывăр çула утса тухмалла-ха».

Фашистсен политикин стратеги тĕлĕшĕнчи вилĕмле йăнăшĕсенчен пĕри—гитлерла Германин икĕ тата ытларах та фронтра вăрçма тивни пулать. Халĕ пур фронтсем те пĕр пекех активлă мар-ха. Анчах, США президенчĕпе Великобританин премьер-министрĕ пĕрле янă посланире çакăн пек канашлу пухма сĕннине Совет Правительстви питех те кăмăллăн йышăнчĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен çулпуçĕ, Совет Правительствин пуçлăхĕ Сталин юлташ США тата Англи посолĕсене панă хăйĕн ответĕнче президент Рузвельта тата премьер-министр Черчилле вĕсем гитлерла Германие хирĕç, ирĕклĕхе юратакан халăхсем çулпуçĕ, Совет Правительствин ячĕпе чĕререн тав турĕ. Сталин юлташ чĕртаварпа вооруженисене валеçес тĕлĕшпе Мускавра виçĕ çĕршыв представителĕсен канашлăвне пухма сĕнине саламлани çинчен пĕлтерчĕ.

Мускаврă ирттерме палăртнă канашлу,—унта тăшмана хирĕç кĕрешессин пĕрлехи планĕсене хатĕрлемелле пулать,—этемлĕхе нацистсен тиранийĕнчен хăтарас тĕллевпе пурнăçа кĕртес ĕçре СССР, США тата Англи пĕр-пĕринпе тухăçлăн хутшăнса ĕçлессине, паллах ĕнтĕ, татах та ытларах тĕреклетет. СССР, Великобритани тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсем тăшмана хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешни ытларах та ытларах конкретлă тата ĕçлĕ формăсене йышăнать. Çак кĕрешӳ темле йывăр пулсан та, çĕнтерӳ патне çитес çул темле йывăр пулсан та, ирĕклĕхе юратакан халăхсем пĕр пулса ĕçлени çĕнтерӳ тăватех. Тăшмана çапса аркатăпăр, çĕнтерӳ пирĕн алăра пулĕ!

(«ПРАВДА» хаçатăн августăн 17-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Августăн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противник войскисене пыра-пыра çапнă тата унăн аэродромĕсенчи авиацине атакăланă.

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енчи Н-ски участокĕнче Невзоров капитан командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть нимĕçсен пехота батальонне, инженерлă ротине, артиллери дивизионне тата 160 салтакпа офицертан тăракан мотоциклистсен отрядне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă. Хăйсен танковой колоннинчен татăлса юлнă фашистсем каялла хăйсен часĕсем патне кайма хăтланнă. Анчах ĕç тухман. Хăйсене йĕри-таврах хупăрласа илнĕ хыççăн, нимĕçсем оруди-семпе автоматсенчен тĕлли-паллисĕр пеме тытăннă. Совет бомбардировщикĕсен звени темиçе хут пырса çапнипех противникăн артиллери дивизионне тата противотанковăй 11 тупăна пĕтерсе тăкнă. Силин лейтенантăн танковăй взвочĕ тăшманăн пехота ротине пĕччен тăратса хăварса, унăн составне çурринчен кая мар персе вĕлернĕ. Зотов лейтенантăн стрелковăй взводĕнчи красноармеецсем штыксемпе хăюллăн атакăласа фашистсен ротине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти групписене пирĕн бронемашинăсем аркатма пуçланă. Нимĕç соединенине çĕмĕрсе тăкас ĕçе Новзоров юлташăн часĕнчи боецсем вĕçленĕ. Фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 730 çынна вĕлернĕ тата амантнă. 143 çынна тыткăна илнĕ. Пирĕн трофейăсем: темиçе оруди, зенитнăй виçĕ батарея, юсавлă 12 станковăй пулемет тата 18 ручной пулемет, 31 миномет, 11 автомашина тата 65 мотоцикл.

* * *

М. юлташăн командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ В. ялĕ патĕнче нимĕçсен аэродромне аркатса тăкнă. Разведчик-партизансем ял çывăхĕнче темиçе кун хушши пурăннă, вĕсем нимĕçсен командинче миçе çын тăнине тата вĕсем кун каçиччен мĕн тунине палăртнă. Августăн 9-мĕшĕнче каçхине партизансем аэродром патне пысăк мар группăсемпе пыма пуçланă. Разведчиксем чи малтан шăвăнса пырса, часовойсене шăпăн вĕлернĕ. Аэродромăн ытти охранине технически персоналĕ партизансене хирĕç пеме хăтланнă, анчах вĕсем хирĕç тăнине часах путарса лартнă. Хире-хирĕç пенĕ вăхăтра 22 фашиста вĕлернĕ. Аэродрома туртса илнĕ хыççăн, партизансем унта ларакан 12 самолета горючи сапса вут тĕртсе çунтарнă. Партизансем икĕ автомашина туртса илнĕ, вĕсем çине нимĕçсен пулемечĕсемпе винтовкисене, боеприпассене тата танксене хирĕç кĕрешме отряда кирлĕ чухлĕ темиçе пичке бензин тиесе хăйсем патне илсе кайнă.

М. юлташăн партизансен отрячĕ кĕрешекен район ерипен сарăлсах пырать. Д. ялĕ патĕнче партизансем кĕпере взрыв туса аркатнă, тăвата автомашинăна, 6 салтакпа пĕр офицера пĕтерсе тăкнă. Тепĕр кунне отряд нимĕçсен пысăк мар обозĕ çине тапăнса, боеприпассемпе горючи тиенĕ 11 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата çăмăл машинăна туртса илнĕ. Обозпа пĕрле пынă 24 салтакпа 6 офицера вĕлернĕ. Августăн 11-мĕшĕнче С. ялĕ патĕнче отряд хăйсен часĕнчен юлнă 27 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ тата пĕр танка взрыв туса аркатнă. Августăн 12-мĕшĕнче партизансем Н. разъезчĕ çине тапăннă, темиçе вырăнта чугунçула сӳтсе тăкнă тата пĕр бронемашинăна пĕтернĕ. Çак районра партизансем пулеметран персе фашистсен «Ю—88» йышши пĕр бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Германи çарĕ чĕрĕ вăй тĕлĕшпе калама çук пысăк çухатусем тӳсет. М. хули патĕнче пулса иртнĕ çапăçура Хĕрлĕ Çар часĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 5 пин çынна çити пĕтерсе тăкнă. М. хулинчи çынсем, пирĕн чассем йышăнса илнĕ территори çине августăн 14-мĕшĕнче тарса килĕшкерсем, каласа панă тăрăх, нимĕçсен командованийĕ хулара тата çывăхри ялсенче пурăнакансене, алла кĕрсе тытма пултаракансене пурне те траншея-масарсем чавма мобилизацилене, анчах ку та çителĕксĕр пулнă. Вара нимĕçсен офицерĕсем хăйсен сапĕрсене минăсемпе взрыв туса траншея-масарсем тума приказ панă. Салтаксене çакăн пек хăйне евĕрлĕ пытарнине куракансем тĕлĕнмелле картинăсем çинчен каласа параççĕ. Çапăçу хирĕнчен нимĕç салтакĕсен виллисене кунĕн-çĕрĕн грузовиксемпе турттарнă. Грузовиксем çинче вилесемпе пĕрлех нимĕçсен йывăр аманнă салтакĕсем те пулнă. Вилнисене те, йывăр аманнисене те шăтăксене пăрахса тăпра тултарса лартнă. Пĕр масар патĕнче çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Шăтăка ӳкнĕ вăхăтра нимĕçсен йывăр аманнă салтакĕсенчен тахăшĕ хăйне пулăшу памасыйтса кăшкăрса янă. Патĕнче тăракансем нимĕн тума аптăраса çитнĕ. Офицер хытă сасăпа темĕнле приказани панă та, йывăр аманнă нимĕç салтакне нимĕн хумханмасăр персе вĕлернĕ.

* * *

Çĕршер пин рабочисем, служащисем, колхозниксем тата совет интеллигенчĕсем ĕçрен пушă вăхăтра çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ, кирлĕ вăхăтра Германи фашизмне хирĕç кĕрешме фронта кайма хатĕрленеççĕ. Мускаври «Красная Пресня» заводри рабочисем кучухнехи хĕçпăшалсене тата çапăçу нтактикăллă приемĕсене вĕренеççĕ. Ивановăри меланжевăй комбинатра ĕçлекен 150 рабочипе служащи штыксемпе çапăçмалли техникăна питех те лайăх вĕренсе çитнĕ. Алма-Ата хулинче Особиахимăн вĕренӳ подразделенийĕсене 20 пин çын ытла кĕнĕ. Вĕсем воротниловла стрелоксен, станковăй пулеметчиксен, радистсен, сывлăшпа килсе тапăннинчен тата химилĕ тапăнуран сыхланакан боецсен групписенче вĕренеççĕ.

Колхозлă Донăн станицисемпе хуторĕсенче ворошиловла кавалеристсен групписене тунă. Кастынски районри «Красный партизан», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче, Актайски районри Советсен Кăйри Иккĕмĕш Съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра тата Орловски районри «Пламя революции» колхозра кавалери групписем занятисене йĕркеллĕ ирттереççĕ. Вишенская станицинче кавалеристсен отрячĕ боевой подготовкăн курсне вĕренсе пĕтернĕ, отряд гитлерла бандитсене хирĕç кĕрешме фронта тухса кайма хатĕр. Кабардино-Балкар АСС Республикинчи Урвански районри Сталин ячĕпе тăракан колхозра стрелковăй подразделени организацилене, çав подразделени винтовкăпа пулеметăн материальнăй частьне хăнăхса çитнĕ, алă вĕççĕн çапăçма, маскировка тата харпăрăй валли окоп тумалли методсене вĕренсе çитнĕ. Рязань облаçĕнчи Скопински районри мĕнпур предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче тата вĕренӳ заведенийĕсенче самозащита групписем тунă, çав группăсем виçĕ пин çынна ытла пĕрлештерсе тăраççĕ. Осоавиахим организацийĕсем кашни кунах 30—40 километрлă военизированнăй походсем туса ирттереççĕ.

ССР Союзĕпе Англи хушшинче таварçаврăнăшĕ, кредит тата клиринг çинчен тунă килĕшӳ

Кăçалхи августăн 16-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕпе Англи хушшинче таварçаврăнăшĕ, кредит тата клиринг çинчен килĕшӳ туса алă пуснă.

Килĕшӳре Англирен Совет Союзне нумайрах таварсем тăратассине, çавăн пекех советăн хăшпĕр таварĕсене Англие тăратассине кăтартса панă.

Килĕшӳ тăрăх çав таварсене тӳлесе илме Совет Союзне Англия 5 çул хушши срокларăха, çулсерен виçшер процент тӳлесе тăмалла йĕркепе, 10 миллион фунт стерлинг кредит парать.

Çав кредитăн кăтартса панă суммине усă курса пĕтересси патне çитсен, правительствăсем кредит суммине ӳстересси çинчен калаçусем пуçласа яраççĕ.

Икĕ енĕ те тӳлевсене клиринк никĕсĕ çинче йĕркелесе пыраççĕ.

Килĕшӳ çине Совет Правительствин ячĕпе ССР Союзĕн Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян юлташ, Британи правительстви ячĕпе — Великобританин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ г-н Стаффорд Криппс алă пуснă.

Вырнă кунах кĕлтесене çĕмеле хывăççĕ

Колхозсем уборкăна лайăх хатĕрленсе тухрĕç, 60 колхозра столовăйсем организацилене, пур колхозсенче те пекех ача ясликсемпе площадкăсем уснă.

Иртнĕ çулхине «Камай» колхозра уборка ĕçĕ вăрăма тăсăлса пынăччĕ. Кăçал çав çитменлĕхе малтанах шута илнĕ. Колхозниксем ĕçе организованно тухаççĕ. Ытти колхозсенче те уборка ĕçĕ аван пырать. Колхозница-стахановкăсем кулленхи нормăна 200—250 процент таран тултарса пыраççĕ. Вырнă кĕлтесене çав кунхинех çĕмеле хывăççĕ. Августăн 13-мĕшĕнче «Красный флот» тата Клим Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ. Нумай колхозсенче аван çапма пуçларĕç.

С. ИЛЬИН.
Çĕрпӳ райçĕрĕç отделĕн заведующийĕ.

Хастарлă çамрăксем

«Октябрь» колхозра (Елчĕк р.) ĕçлеççĕ вĕсем. Иккĕмĕш бригадăра мĕнпурĕ 41 çын, вĕсенчен 12-шĕ — çамрăк ачасем. Çамрăк ачасем пĕр кун та ĕçрен юлмаççĕ, кулленех колхозниксемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Акă Саня Семеновах илер, вăл халь 12 çулта çеç-хапла пулин те паян вăл 35 кĕлте вырнă. Çамăр пулман пулсан, тепĕр 20 кĕлте выраттăмах, тет. Леонидпа Коля та хăйсем тĕллĕнех лашапа çӳреме вĕренсе çитнĕ. Паян вĕсем вите çине витме 17 лав улăм турттарнă.

С. ЯЛАВИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç хаяр çапăçусем туса пынă. Сине тăрса вăйлăн çапăçнă хыççăн, пирĕн войскăсем Николаев тата Кривой Рог хулисенчен тухса кайнă. Николаеври верфьсене взрыв туса сирпĕтсе янă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, августăн 16-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăн 19 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

Хура тинĕсре пирĕн подводнăй лодкăсем Румынин икĕ пысăк транспортне шыва путарнă.

* * *

Старший лейтенант Запевалован пехотнăй подразделенийĕ хӳтĕлесе тăракан позици сине противникăн 18 танкĕ наступлени тума пуçланă. Подразделени командирĕ боецсене пĕлсе вырнаçтарса тухнă, вĕсене шăтăксенче, вĕтлĕхсенче, çул патĕнчи каналсенче тата йывăçсем çинче тĕплĕн пытарнă. Нимĕçсен танкĕсем 20—25 метра çити çывхарса пырсан, Запевалов юлташ нимĕçсен командирĕн танкĕн гусеници айне гранатăсен çыхăнне пăрахнă. Малтанхи взрыв ытти боецсемĕн сигнал пулса тăнă. Тăшман танкĕсем сине гранатăсемпе бензин тултарнă бутылкăсем ывтăнма пуçланă. Паттăр пехотинецсем, танксен атакине хăюллăн кĕтсе илсе, нимĕçсен 10 танкне стройран кăларнă. Ытти 8 машини каялла çавăрăнса тарма пуçланă. Фашистсен танкĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте сержант Холмогоров уйрăмăнах пăларнă, вăл гранатăсемпе персе икĕ танка стройран кăларнă. Çавăн пекех Гузаков тата Ларцын красноармеецсем те пăларнă, вĕсем горючи тултарнă бутылкăсемпе персе виçĕ танка вут тивретсе янă.

* * *

Хĕрлĕ Çар часĕсем питех те хĕрӳллĕн хирĕç тăнине пула, Германи фашисчĕсем çапăçăва çĕнĕрен те çĕнĕ чассене кĕртсе ярасçĕ, çав чассем çапăçу хирĕсенче хăйсен вилемĕсене тупасçĕ. Темиçе кун каялла Кăнтăр-Хĕвеланăç енче Германин 262-мĕш пехотнăй дивизии 452-мĕш тата 485-мĕш полкĕсене пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем питех те нумай автомобильсем, мотоциклсем тата велосипедсем пăрахса хăварнă. Дивизин ытти полкĕсем хăйсен салтакĕсемпе вооруженине 80 процента çити çухатнă. Гусаково патĕнчи çапăçусенче дивизине татăклăнах çĕмĕрсе тăкнă, халĕ вăл боевой единица пулса тăмасть. 262-мĕш дивизи Франции хирĕç пынă вăрçăра пулнă, фашистсем ăна Германи çарĕн чи лайăх дивизийĕсенчен пĕри тесе шутланă.

Юлашки кунсенче 94-мĕш пехотнăй дивизи пысăк çухатусем тунă. Студенец-Ковали участокĕнчи çапăçусенче дивизи салтаксен составне 70 процента яхăн çухатнă. Салтаксемпе офицерсем 500 çын тытăкăна парăннă. Пирĕн войскăсем нумай трофейăсем туртса илнĕ.

Туртса илнĕ Совет çĕрĕн кашни метăрĕшĕн Германи фашисчĕсен питех те нумай салтаксем вилеççĕ. Жуляны ялне атака тума хăтланнă чухне нимĕçсен 279-мĕш пехотнăй полкĕ çапăçу хирĕсенче вилнисене кăна 600 çын ытла хăварнă. Нумай велосипедистсенчен тата кавалерирен тăракан 99-мĕш çăмăл дивизи Кутузовка патĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене çуррине яхăн çухатнă. Çав дивизин 218-мĕш полкне çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Д. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ белофинсен тылĕнчи штабĕ сине хăюллăн тапăннă. Отряд боецĕсем 11 офицера вĕлернĕ, пĕр çăмăл машина тата икĕ грузовой машина, станковăй пулемет тата темиçе лаша туртса илнĕ.

К. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ белофинсен канма вырнаçнă взвочĕ сине çĕрле атака тунă. Пулса иртнĕ çапăçура белофинсен 32 салтакне вĕлернĕ тата амантнă. Партизансем 15 пулемет тытса илнĕ. Отряд боецĕсем горючисен пытарса лартнă складне тупса çунтарса янă. Августăн 13-мĕшĕнче ирхине партизансем М. ялĕ патĕнче колхозăн çунса пĕтекен хирĕ çинче нимĕçсен 4 моторлă самолечĕ, анса ларма вырăн шыраса, явăнса çӳренине курнă. Хире çийĕнчех çавăрса илнĕ. 5—7 минута иртсен фашистсен бомбардировщикĕ анса ларнă. Кабинăран 4 летчик тухнă. Хире çавăрăнкаласа пăхаланă хыççăн, нимĕçсем самолет ăшĕнчен вилнĕ икĕ летчика кăларнă та васкавлăн çĕр айне чавса хунă. Çак вăхăтра снайпер-партизансем самолет патне çывăхарах шуса пынă, пĕрин хыççăн теприне виçĕ фашиста персе ӳкернĕ. Юлашки нимĕçĕ тутăрпа суллама тата парăнап тесе кăшкăрма тытăннă. Партизансем ярса илнĕ самолет «ФВ—200» маркăллă бомбардировщик пулнă. Кайран пăларнă тăрăх, самолетăн ирĕкĕрех анса лармалла пулнă, мĕншĕн тесен çу бакне виçĕ çĕртен пулясем тивсе шăтарнă.

П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ нимĕçсен автоколонни сине пулеметсенчен пенĕ. Водительсемпе конвой хăраса ӳкнипе усă курса, партизансем фашистсен 28 автомашинине тата 36 салтакне пĕтерсе тăкнă. Белофинсемпе нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнчи партизанла движенин анлăшĕ çинчен çак даннăйсем каласа парасçĕ: юлашки кунсенче кăна партизансен отрячĕсем 8 кĕпере взрыв туса сирпĕтсе янă, чугунçулсем çинче 11 крушени тунă, 35 самолет, 18 танк, 72 автомашина, 4 бронемашина, 480 салтак тата 25 офицер пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 19-мĕш танковăй дивизи штабĕнчи тыткăна лекнĕ офицер Галингер хăйне ухтарнă чухне пĕр çырăва пĕтерсе тăкма хăтланнă. Çырăва унтан туртса илнĕ те пирĕн Н-ски дивизин штабне панă. Çыру авторĕ, 19-мĕш дивизири полксенчен пĕрин офицерĕ, Либхард çапла çырать: «...ку вăл—çыру, рапорт мар, çавăнпа та эпĕ кăштах ӳççăнрах çыратăп. Халĕ пирĕн полкра мĕн пулса иртнине эпĕ çырса пама та вăй çитерейместĕп. Полкра пĕр танк та юлмарĕ. Мĕнле-ха вăл танковăй полк пултăр!.. Дивизи штабĕ пире пĕлтернĕ тăрăх çĕнĕ танксем эпир часах илместпĕр. Пире мĕнпурринех вăрçма приказ панă. Пире тума май çук ĕçе тума хушасçĕ, тесе калама пултаратăп эпĕ. Танксемсĕр пирĕн çынсем—салтаксем мар, темĕнле хăравçă кроликсем пек туйăнасçĕ. Вĕсем броня ăшĕнче ларма хăнăхнă. Унта вĕсем хăйсене шанчăклăн тыткаласçĕ. Танксемсĕр çолнă пирки вĕсем шанчăка çухатаççĕ, хăравçăлла унталла-кунталла пăхкаласа илеççĕ те пăчăртанаççĕ тата пытанмалли вырăн шыраççĕ. Сана палла ĕнтĕ, пехотинецсем те хăйсен çумĕнче пирĕн машинăсем пур чухне кăна çапăçма пултараççĕ. Танксем кайса çухалсанах, пехотинецсен çапăçури хастарлăхĕ пĕтет».

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ танкисчĕсем каласа панă тăрăх, 19-мĕш дивизире кăна мар, тата Смоленск енче кĕрешекен ытти чылай чассенне те нумай танкĕсене стройран кăларнă.

* * *

Гитлеран вăрçа «çиçĕм пек хăвăрт» туса ирттерес планĕсем арканса кайнине пула, фашистсен запрапилисем халех ĕнтĕ вырăссен хĕлĕ çинчен каласа пуçларĕç. Августăн 15-мĕшĕнче Осокинпа Гремячев лейтенантсем, разведкăра чухне, нимĕçсен штаб машинине Германин 144-мĕш дивизин 132-мĕш пехотнăй полкĕн офицерĕпе пĕрле тытса илнĕ. Тытăкăна илнĕ офицер Осокинпа Гремячев юлташсене чылай документсем панă, çав документсем хушшинче нимĕçсен командованийĕ «Вырăс хĕлĕн условийĕсенче вăрçма войскăсене хатĕрлесси çинчен» ятарласа панă приказ пур. Приказра, сăмах майăн, çапла каланă: «Соединенисен командирĕсем хăйсен донесенисемпе доклачĕсенче шĕлтернĕ тăрăх, нумай салтаксем тата офицерсем те вырăс сиввисенчен шитĕ хăраççĕ. Çакăн пек паникăна лексе хăранине пур майсемпе те сирсе ямалла. Малтанах аса илеймен обстоятельствăсене пула Российăна хирĕç пыракан вăрçă вăрăма кайнине салтаксене меллĕрех майпа ăнлантарса памалла. Пропаганда ротисем çак ĕçе пуçларĕç ĕнтĕ, чассен командирĕсем вĕсене çак ĕçре пулăшмалла. Салтаксемпе каласа чухне вăрçă пĕтесси татăклă сроксĕсене калама кирлĕ мар. Вăрçă пĕтес сроксем çинчен кирек мĕнле каласни те халĕ кирлĕ мар. Хĕллехи условисенче вăрçма войскăсене хатĕрлес ĕçе халех тытăнмалла. Чассен командирĕсем хĕллехи тумтирсен, уйрăмăнах çăматăсен запасне туса хурас тĕлĕшпе тăрăшма тивĕçлĕ».

Августăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Старший лейтенант Слезкинăн пехотнăй подразделенийĕнчи боецсем фашистсен танкĕсене пĕтерсе тăкас техникăна чаплăн вĕренсе алла илнĕ. Кировоград енчи хаяр çапăçусенче ефрейтор Лесс ручной гранатăсем ывăтса фашистсен виçĕ танкне стройран кăларнă. Долгуновпа Брянцев красноармеецсем иккĕшĕ пĕрле пулса горючи тултарнă бутылкăсем пăрахса нимĕçсен машинисене пĕтере-пĕтере тăхаççĕ. Хăюллă боецсем виçĕ кун хушшинче çавăн пек майпа нимĕçсен икĕ вăтам танкне тата икĕ йывăр танкне вут тивретнĕ. Икĕ эрне хушшинче Слезкин юлташăн подразделенийĕ тăшманăн 17 танкне стройран кăларнă. Подразделени командирĕ Слезкин юлташ хăй патăрлăхпа чăтăмлăх примерне кăтартса парать. Кулленех вăл çапăçу хирĕнче красноармеецсене тăшман танкĕсене пĕтерсе тăкмалли мастерлăха вĕрентет.

Полковник Некрасов юлташăн пехотнăй часĕ вăйлă çапăçу пулса иртнĕ хыççăн Н. высотине йышăнса илнĕ. Ку высота çинче нимĕçсем çирĕп укрепленисем тунă пулнă, нумай пулеметсем, минометсемпе артиллери батарейисене илсе пынă. Ирхине старший лейтенант Люмановăн подразделенийĕнчи боецсем нимĕçсен «СС» текен полк батальонĕнчи салтаксем йышăннă высотана атакăланă. Çапăçу кăçеневех пынă. Оруди командирĕ кĕçĕн сержант Стрелец тăшманăн пулеметсем лартнă 5 йăвине, тăвата минометне пĕтерсе тăкнă тата высота çинче ларакан нимĕçсене пулăшма пыма хăтланнă фашистла салтаксен икĕ группине персе вĕлернĕ. Кун вĕçленнĕ тĕле нимĕçсем çапăçу хирне 213 çын виллине, икĕ тупă, темиçе миномет тата нумай снаряжени пăрахса хăварса, каялла тарнă.

* * *

Пирĕн разведка Смоленскран 50 километр хĕвеланăçнерех Д. районĕнче нимĕçсен артиллери снарячĕсен питĕ тĕплĕн пытарса хунă складне тупса палăртнă. Советăн Н-ски соединенийĕн командованийĕ çав склада пĕтерсе тăкма йышăннă. Ку задачăна пурнăçа кĕртме противник тылне капитан Аксенов ертсе пыракан саперсен подразделенине янă. Склад ăста вырнаçнине, ун патне мĕнле пымаллине тата унти охранăн хисепне тĕплĕн палăртса, капитан Аксенов склада пĕтерсе тăкмалли план туса хатĕрленĕ.

Палăртнă сехетре красноармеецсем боевой заданине пурнăçа кĕртме тытăннă. Младший лейтенантăн Чистяков юлташăн взводĕнчи боецсем склад патĕнчи часовойсене шăппăн вĕлерсе, склад начальникĕ тата нимĕçсен пĕр артиллери дивизионĕн командирĕ ларса пыракан çăмăл машинăна тытса чарнă. Красноармеецсен группи политрук Халилов ертсе пынипе телефон çыхăнăвне часах çĕмĕрсе тăкнă, канцелярине ярса илнĕ тата караул сурчĕ хупăрласа илнĕ. Нимĕçсем хирĕç тăнă, анчах вĕсене хăвăртах хĕçпăшалсăрлатнă. Пĕр сехет хушшинче капитан Аксенов складри пур пӳлĕмсене те минăсем хурса тухнă. Унтан сигнал тăрăх пирĕн саперсем склад территорийĕнчен тухса кайнă. 15 минута иртсен пирвайхи взрыв кĕрлесе кайнă, ун хыççăн иккĕмĕш, виççĕмĕш... Темиçе нӳхрепе хунă снарядсем икĕ сехет хушши çурăла-çурăла кайнă. Артиллери складĕ таврашĕнчи пысăк территорийĕнче çулсемпе тĕрлĕрен çурт-йĕрсене ишĕлтерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Слуцк хули зонинче кĕрешекен партизансен отрячĕсем фашистсемшĕн чăтма май çук йывăрлăхсем туса хурасçĕ. Нимĕçсен боеприпассем, горючи тата продовольстви турттаракан транспорчĕсене партизансем кашни кун пĕтерсе тăкасçĕ, нимĕçсен разведчикĕсемпе связисчĕсене, хăйсен часĕсенчен тăрса юлнă нимĕç салтакĕсене тата фашистсен çарĕн уйрăм подразделенийĕсене те вĕлерсе пĕтереççĕ. Нимĕçсен командованийĕ Слуцкри çар комендантне партизанла отрядсене пĕтерсе тăкма, «пачах чăтма çук, уйрăмăнах питĕ кирлĕ шоссе магистралĕ иртсе каякан районра чăтма çук» партизанла отрядсене пĕтерсе тăкма пĕрре çеç мар хушнă. Комендант йышăннă мерăсем нимех те тума пултарайман. Август уйăхĕн пуçламĕшĕнче фашистла комендантăн командованине ирĕксĕрех çапла пĕлтермелле пулнă: «партизанла отрядсен хисепĕ ӳсет, вĕсем хĕçпăшалĕ лайăхланса пырать, вĕсем пирĕн транспортсемпе войскăсем сине чи кĕтмен вырăнсенче пырса тапăнаççĕ тата хăйсен çавтери паттăр характерĕпе ахаль чухнехи вăрçă операцийĕсем çинчен эпир кирек мĕнле шутланине те сирсе яраççĕ». Çав донесенине илнĕ хыççăн, Германи командованийĕ коменданта каллех «кирек мĕн чухле ларсан та мĕнпур партизансен отрячĕсене 10 кун хушши срокра пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма» хушнă. Анчах партизанла движени ӳссех тата сарăлсах пырать.

* * *

Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 68-мĕш пехотнăй дивизине çĕмĕрсе тăкнă чухне туртса илнĕ документсем хушшинче Германи çарĕнчи пропаганда ротисен пур командирĕсем патне те янă секретлă циркулярлă сырăва тупса палăртнă. Фашистла заправилăсен уйрăм çыннисем валли ярса панă хупă сырура фашистсен войскисем оккупациленĕ çĕршывсенче халăха кирек-мĕнле тискерле асаплантарнине те мухтаççĕ тата туртса илнĕ хуласенче, ялсемпе саласенче киревсĕр те чарусăр çаратнисене закон тăрăх пулакан ĕç тесе çирĕплетеççĕ. Çак сыруран уйрăмăнах интереслĕ сыпăксене илсе кăтартатпăр: «Секретлă. № УВ 10—43/677. 17.VII. 41 ç. Çĕнĕ районсене оккупациленĕ чухне пропаганда ротисем мĕнле ĕç туса ирттермелли çинчен кирлĕ инструкцисене вăхăтра ярса панă. Халĕ Хĕвел-тухăçри фронтăн уйрăмлăхĕсенчен тухса тăракан тĕп задачăсене тепĕр хут палăртса памалла. Кунта, халичченхи мĕнпур фронтрисенчен те ытларах, салтаксене хĕрхенӳсĕр пулма воспитани памалла. Кирек хамăн та, вăл арçын е хăрăм пулнине, миçе çултине пăхмасăрах, семçе чунлă пулни кирлĕ мар... Хăйĕн ĕçĕпе çынсене Германи массисенчен хăратса ӳкерекен кашни салтаках мухтамалла тата унăн пуçаруне сарса пымалла... Пропаганда работникĕсен çарĕнчи кашни офицерпа салтака вăрçăра кашниех материальнăй интерес тытса пыма воспитани памалла... Çак директивăна тӳремĕнех пропаганда ротисен командирĕсене кăна параççĕ, çавăнпа та ăна ытти çынсене пĕлтерме юрамасть. Салтаксемпе тата халăхпа официальнăй ĕркепе калаçнă чухне вырăнлă формăна пăхăнса пырас пулать».

* * *

Ĕнер çамрăксем тăван çĕршыв оборонин фончĕ валли ирттернĕ воскресник пĕтĕм çĕршывĕпе халиччен пулман пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Фабрикăсенче, заводсенче, шахтăсенче, чугунçулсем çинче тата колхозсен уйхирĕсенче вунпилĕк миллион совет патриочĕсем ĕçленĕ. Мускавпа Мускав облаçĕнче воскреснике, тулли мар даннăйсем тăрăх, 1.100 пин çын хутшăннă. «Красный пролетарий» заводра, Орджоникидзе ячĕпе тăракан танкозаводра, Каганович ячĕпе тăракан тормозной заводра, столицăри тата ытти нумай предприятисенче те воскреснике мĕнпур рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем тухнă. Воскреснике хутшăннă çынсенчен нумайĕшĕ рекордлă тухăçпа ĕçленĕ, нормăсене ик-виçĕ хут е ытларах та иртнĕ тултарнă.

Хабаровскра воскреснике 25 пин ытла çамрăк, Владивостокра 47 пин çын тухнă. Хабаровскри Молотов ячĕпе тăракан заводра фрезеровщиксен бригади, Сыробитников юлташ ертсе пынипе, тăвата сехет хушшинче пĕр кунхи нормăна 150 процент тултарнă. Рязань облаçĕнче воскреснике 220 пин çын ытла ĕçленĕ. Сельмаш заводри çамрăк рабочисем Летницкий, Сигаев тата ытти нумай юлташсем сменăри заданине ик-виçĕ хут иртнĕ тултарнă. Ташкент облаçĕнчи 100 пин ытла патриотсем воскреснике хутшăннă. Уралмашзаводра, Воровский ячĕпе тăракан заводра, «Металлист» заводра, Свердловск облаçĕнчи ытти нумай предприятисенче воскреснике мĕнпур рабочисемпе служащисем тухнă. Совхозсемпе колхозсенче те воскресник çавăн пек активлăхпах иртнĕ. Колхозниксемпе тата совхозсенчи рабочисемпе пĕрле уйхирсенче пиншер студентсем, пионерсемпе шкул ачисем ĕçленĕ.

Воскресник совет çамрăкĕсем Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕсне тăнине, пирĕн ĕççыннисем ылханлă тăшмана—фашизма çĕнтерме Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, çавсемпе пурнăçпа те пулăшма хатĕр тăнине кăтартакан хăватлă демонстраци пулса тăчĕ.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе пыма хăтланни ăнăçсăр пулнă

Августăн 16-мĕшпе 17-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсен пысăк мар группи Мускав çине вĕçсе пыма хăтланнă. Тăшман самолечĕсене салатса янă, Мускав патне пыма паман.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе пыма хăтланни ăнăçсăр пулнă

Нимĕç самолечĕсен пысăк мар группи августăн 17-мĕшпе 18-мĕш хушшинче çĕрле Мускав çине вĕçсе пыма хăтланса пăхнă. Тăшман самолечĕсене сапаласа янă, Мускав патне пыма паман.

Августăн 16-мĕшпе 17-мĕш хушшинче çĕрле Мускав çине вĕçсе пыма хăтланнă чухне нимĕçсенне пĕр самолет персе ӳкернĕ.

Страховка укçисенэ тӳлесе татрĕç

ИШЛЕЙ. Салăбайкасси ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ ялав», Кибеткасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхозсем 1941 çулăн тӳлемелли страховка укçине пĕтĕмпех парса татрĕç.

Д. МИХАЙЛОВА.

Ирĕклĕхе юратакан халăхсен хăватлă фрончĕ çирĕпленет

США президенчĕ Рузвельт тата Англи премьер-министрĕ Черчилль Сталин юлташ патне янă личнăй послание çĕршывăн пур предприятийĕсенче те хĕрӳллĕн сӳтсе-явасçĕ.

— Виçĕ держава Мускавра канашлу туса ирттерессине пуçарса янине пирĕн пĕтĕм халăх кăмăллăн ырласа йышăнать. Ку вăл гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен хăватлă вăйсем малалла пĕтĕçнине çирĕплетесе парать,— тенĕ Мускаври «Красный пролетарий» заводри наладчик Новиков юлташ.

Рузвельтпа Черчилль янă посланин текстне пичетленĕ хаçатсен çĕнĕ номерĕсене илсенех, Донбасри «Куйбышевуголь» трестĕн Горький ячĕпе тăракан шахтинче митинг пулса иртнĕ. Пĕр çын пек пулса йышăннă резолюцире горняксем Совет Правительствине фашистла çĕлен-калтасене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешме хатĕр тăни çинчен шантарса калаççĕ.

США президенчĕ тата Великобританин премьер-министрĕ Черчилль Сталин юлташ патне янă личнăй послание текстне Мускаври Сталин ячĕпе тăракан заводăн пур цехĕсенче те вуланă.

Стахановец Клюев çапла калать:

— Гитлера пăвакан майкăч хытăран та хытă хĕссе пырать, ирĕклĕхе юратакан халăхсен тимĕр пек çирĕп союзăн фашизма пĕтерсе тăкать. Совет Союзне пама палăртнă пулăшупа США-па Великобритани правительствисене, США президентне Рузвельта тата Великобританин премьер-министрне Черчилле хăйсене те совет халăхĕ кĕрӳллĕн тав тăвать. Виçĕ держава пĕрле пулса вăй хуни юнлă гитлеризмăн преступленийĕлле ĕçĕсене пĕтерсе тăкĕ. (ТАСС).

Черчилльпе Рузвельт Сталин юлташ патне янă личнăй послани çинчен ютçĕршывсенчи пичет мĕн çырать

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Англи хаçачĕсен уметлăисен авторĕсем тата дипломатиллĕ обозревательсем Рузвельтпа Черчилль Сталин юлташ патне янă посланине чапла вырăн йышăнать. Ку вăл гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен хăватлă вăйсем малалла пĕтĕçнине çирĕплетесе парать,— тенĕ Мускаври «Красный пролетарий» заводри наладчик Новиков юлташ.

Рузвельтпа Черчилль янă посланин текстне пичетленĕ хаçатсен çĕнĕ номерĕсене илсенех, Донбасри «Куйбышевуголь» трестĕн Горький ячĕпе тăракан шахтинче митинг пулса иртнĕ. Пĕр çын пек пулса йышăннă резолюцире горняксем Совет Правительствине фашистла çĕлен-калтасене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешме хатĕр тăни çинчен шантарса калаççĕ.

США президенчĕ тата Великобританин премьер-министрĕ Черчилль Сталин юлташ патне янă личнăй послание текстне Мускаври Сталин ячĕпе тăракан заводăн пур цехĕсенче те вуланă.

Стахановец Клюев çапла калать:

— Гитлера пăвакан майкăч хытăран та хытă хĕссе пырать, ирĕклĕхе юратакан халăхсен тимĕр пек çирĕп союзăн фашизма пĕтерсе тăкать. Совет Союзне пама палăртнă пулăшупа США-па Великобритани правительствисене, США президентне Рузвельта тата Великобританин премьер-министрне Черчилле хăйсене те совет халăхĕ кĕрӳллĕн тав тăвать. Виçĕ держава пĕрле пулса вăй хуни юнлă гитлеризмăн преступленийĕлле ĕçĕсене пĕтерсе тăкĕ. (ТАСС).

Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонра наблюдательсем Черчилльпе Рузвельт Сталин патне янă посланинче палăртса панă мероприятисем национал-социалистла тиранине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассишĕн пыракан кĕрешӳ çулĕнче пысăк утăм пулса тăрать, тесе шутласçĕ. Наблюдательсем шутланă тăрăх, çак чĕнӳ вăл Германи фашизмне тытса чарма Российăн пултарулăх пуррине, Российăна яма палăртнă вăрçă материалĕсен хисепĕ пысăк пулассине кăтартса парать.

Славянсем нихăçан та чурасем пулмаççĕ

Мĕнпур славян халăхĕсен августăн 10-мĕшĕнче пухăннă митингĕнче славянсен обществăллă деятелĕсем, ученăйĕсем, писательсем, поэчĕсем туса каланисене эпĕ пĕтĕм чунран итлерĕм. Фашистла ирсĕрсене хирĕç кĕрешме пĕрлешме чĕнни мĕнпур славян халăхĕсен çĕршывсенче халăха кирек-мĕнле тискерле асаплантарнине те мухтаççĕ тата çав çинчен нимĕн çырмасăр тăма пултарайман. Вырăс писателĕ академик А. Толстой тата Болгарин общественăллă деятелĕ А. Стоянов каланă сăмахсене, çавăн пекех мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ пусмăрти мĕнпур славянсене чĕнсе каланине вăрттăн пичетлесе кăларнă листовкăсем мĕнпур çĕршывра анлăн сарăлаççĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Питтсбургри славянсен пысăк организацийĕсен руководителĕсем районри конференцине пухăннă. Вĕсем октябрь уйăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан славянсен представителĕсен мĕнпур Америкăри конгресне пухма постановлени йышăннă. Конгресс организацилес тĕлĕпне ĕçлекен комисси председателĕ пулма «Хорватсен тăванлă союзĕн» председательне Бутковича суйланă.

Августăн 17-мĕш. (ТАСС).

БЕРН, августăн 16-мĕш. Вырăнти журналистсене Польшăн оккупациленĕ территорийĕ çинче таçта вăрттăн ĕçлекен Польша радиостанцийĕнчен панă передачăсем питĕ тĕлĕнтернĕ. Юлашки вăхăтра вăл радиостанци Польшăна Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳçинчен тата мĕнпур славян халăхĕсен Мускавра пулнă митингĕ çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем çырнă пысăк статьясене вулама пуçланă. Анчах ăна çăмăлах ĕçлеймерĕç. Польша халăхĕн ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕвĕ çĕнĕрен ӳссе пынине, вăрттăн ĕçлекен патриотла организацисен активлăхĕ тата партизансен отрячĕсем вăйланнине кăтартса параканнумай фактсем илсе кăтартнă.

Августăн 15-мĕшĕнче станци Краков хулинче витринăсемпе çурт хăпхисем сине Польшăна Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ тата мĕнпур славян халăхĕсен воззванин пĕтĕм текстне сыпăçтарса тухни çинчен пĕлтернĕ. Ирпеле полицейскисем урам тăрăх чупнă, листовкăсене пурне те тĕплĕн çура-çура пăрахнă. Анчах, тепĕр кăсхине листовкăсене каллех тепĕр хут сыпăçтарса тухнă. Ченстоховри костелсенчен пĕринче турра пуçсапса тăракансене пĕр палла мар студент мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ çинчен пĕлтернĕ. Студент сăмахĕсене алă çупса тата «Польша пурăнать», «Польша ирĕклĕ пулать!», «Сывă пултăр мĕнпур славян халăхĕсен туслăхĕ!», «Сывă пултăр СССР!» тесе кăшкăрнипе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен полицийĕ студента тытса арестлеме хăтланнă, анчах халăхсем ăна тарса тытанма пулăшнă. Предприятисенче, уйрăмах чугунçулсем çинче, саботажсем тăвасси йышланнă. Ялсенче тырă тата выльăхсем пухса çӳрекен нимĕçсен отрячĕсене хресченсем час-часах ӳсĕн хирĕç тăраççĕ.

Радиостанци ĕнер хăйĕн передачине çак сăмахсемпе вĕçленĕ: «Польша халăхĕн чĕринче шанчăклăх çĕнĕрен суралса тухрĕ. Унăн чĕринче ылханлă нимĕçсен фашисчĕсене курайманлăх пысăк. Мĕнпур славян халăхĕсемпе пĕрле Польшăн аслă халăхĕ вăйлă çапăçăва çĕкленсе тухать. Вăл çĕнтерет. Вăл хăйне валли ирĕклĕхе каллех тавăрать. Гитлерла ушкăна çĕмĕрсе, лучăркаса пăрахĕ!» (ТАСС).

Мĕнпур славян халăхĕсен Мускаври митингĕ çинчен ютçĕршыв пичечĕ мĕн çырать

Нумай пулмасть Мускавра пулса иртнĕ мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ çинчен пĕтĕм тĕнчери пичет анлăн çырать. Мĕнпур çĕршывсенче славян халăхĕсене фашизма хирĕç кĕрешме пĕрлештерес массăллă движени сарăлса пырать. Карпат лешъенчи Украинăри Мукачево, Хуст, Ужгород хулисенче тата нумай ялсенче вăрттăн пухусем пулса иртеççĕ, вĕсенче мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явасçĕ.

Çак митингра каланă сăмахсем Болгари халăхне пысăк шухăша янă, нимĕçсен аллинче тăракан хаçатсем те ун çинчен нимĕн çырмасăр тăма пултарайман. Вырăс писателĕ академик А. Толстой тата Болгарин общественăллă деятелĕ А. Стоянов каланă сăмахсене, çавăн пекех мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ пусмăрти мĕнпур славянсене чĕнсе каланине вăрттăн пичетлесе кăларнă листовкăсем мĕнпур çĕршывра анлăн сарăлаççĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Питтсбургри славянсен пысăк организацийĕсен руководителĕсем районри конференцине пухăннă. Вĕсем октябрь уйăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан славянсен представителĕсен мĕнпур Америкăри конгресне пухма постановлени йышăннă. Конгресс организацилес тĕлĕпне ĕçлекен комисси председателĕ пулма «Хорватсен тăванлă союзĕн» председательне Бутковича суйланă.

Августăн 17-мĕш. (ТАСС).

БЕРН, августăн 16-мĕш. Вырăнти журналистсене Польшăн оккупациленĕ территорийĕ çинче таçта вăрттăн ĕçлекен Польша радиостанцийĕнчен панă передачăсем питĕ тĕлĕнтернĕ. Юлашки вăхăтра вăл радиостанци Польшăна Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ çинчен тата мĕнпур славян халăхĕсен Мускавра пулнă митингĕ çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем çырнă пысăк статьясене вулама пуçланă. Анчах ăна çăмăлах ĕçлеймерĕç. Польша халăхĕн ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕвĕ çĕнĕрен ӳссе пынине, вăрттăн ĕçлекен патриотла организацисен активлăхĕ тата партизансен отрячĕсем вăйланнине кăтартса параканнумай фактсем илсе кăтартнă.

Августăн 15-мĕшĕнче станци Краков хулинче витринăсемпе çурт хăпхисем сине Польшăна Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ тата мĕнпур славян халăхĕсен воззванин пĕтĕм текстне сыпăçтарса тухни çинчен пĕлтернĕ. Ирпеле полицейскисем урам тăрăх чупнă, листовкăсене пурне те тĕплĕн çура-çура пăрахнă. Анчах, тепĕр кăсхине листовкăсене каллех тепĕр хут сыпăçтарса тухнă. Ченстоховри костелсенчен пĕринче турра пуçсапса тăракансене пĕр палла мар студент мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ çинчен пĕлтернĕ. Студент сăмахĕсене алă çупса тата «Польша пурăнать», «Польша ирĕклĕ пулать!», «Сывă пултăр мĕнпур славян халăхĕсен туслăхĕ!», «Сывă пултăр СССР!» тесе кăшкăрнипе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен полицийĕ студента тытса арестлеме хăтланнă, анчах халăхсем ăна тарса тытанма пулăшнă. Предприятисенче, уйрăмах чугунçулсем çинче, саботажсем тăвасси йышланнă. Ялсенче тырă тата выльăхсем пухса çӳрекен нимĕçсен отрячĕсене хресченсем час-часах ӳсĕн хирĕç тăраççĕ.

Радиостанци ĕнер хăйĕн передачине çак сăмахсемпе вĕçленĕ: «Польша халăхĕн чĕринче шанчăклăх çĕнĕрен суралса тухрĕ. Унăн чĕринче ылханлă нимĕçсен фашисчĕсене курайманлăх пысăк. Мĕнпур славян халăхĕсемпе пĕрле Польшăн аслă халăхĕ вăйлă çапăçăва çĕкленсе тухать. Вăл çĕнтерет. Вăл хăйне валли ирĕклĕхе каллех тавăрать. Гитлерла ушкăна çĕмĕрсе, лучăркаса пăрахĕ!» (ТАСС).

Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ

ИЕПРЕÇ. Кĕлемкасси ялсоветĕнчи «Красный фронтовик» колхоз çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме 200 пăт тырă пачĕ. Ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсем пурте пĕр çын пек пулса тăшмана çĕнтериччен кашни уйăхрах пĕр ĕçкунĕн тупăшне СССР оборонин фондне пама пулчĕç. 1941 çулăн ĕçкунĕсем шучĕпе 200 пăт тырă пачĕç те ĕнтĕ. Çавнашкалах учительница Е. Пудовкина юлташ та оборона фончĕ валли кашни уйăхра пĕр кунхи ĕç укçине пама пулчĕ, кунсăр пуçне вăл август уйăхĕнчи пĕр эрнери ĕç укçине тата 400 тенкĕлĕх заем облигацисене пачĕ.

М. СЕМЕНОВ.

Мародерсем

Выльăхсем валли апат-çимĕç тата витесем хатĕрлеççĕ

Колхозсенче хĕрӳллĕ ĕç пынă хушăрах, выльăхсем валли апат-çимĕç хатĕрлес тата строительство ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Йĕпреç районĕнчи колхозсем августăн 5-мĕш тĕлнĕ 2.163 лав çулçăллă апат хатĕрленĕ, 995 тонна силос хывнă. Малта пыракан колхозсем уборка пуçланас умĕнхи вăхăтпа туллин усă курса, хăйсене валли кирлĕ таранах апат-çимĕççем хатĕрлесе хучĕç. «Костер» колхоз — 105 лав çулçăллă апат хатĕрленĕ, 30 тонна силос хывнă. Çак колхозăн улăх ути те ăнтăлĕклĕ.

Планпа пăхнă тăрăх, Йĕпреç районĕн кăçал 200 лаша, 120 ĕне, 250 сысна тата 1200 чăх-чĕп валли витесем лартмалла. Колхозсенчи строительство бригадисем тăрăшса ĕçленипе, чылай колхозсенче халь çĕнĕ витесем туса пĕтернĕ. «Правда» колхозра 60 пуç вырнаçмаллăх ĕне вити, «11 лет Чувашии» колхозра пăру вити, «Красный водник» колхозра 40 пуç вырнаçмаллăх лаша колхозра 40 пуç вырнаçмаллăх лаша вити туса пĕтернĕ. Çавăн пекех киввĕ витесене юсасси те вĕçленсе пырать. Ку вăхăтчен лаша витисене 34 колхозра, ĕне витисене 9 колхозра, сысна витисене 4 колхозра, сурăх витисене 3 колхозра юсанă.

Октябрьски районри Чăрăш Туçа колхозĕнче лаша витин тăррине хăма витме пуçăннă. «Красный воин» колхоз (Комсомольски р.) чăх-чĕпсем валли çĕнĕ вите туса лартрĕ. Чадукасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче те (Красноармейски р.) выльăхсем валли кирлĕ таранах апат-çимĕççем хатĕрлесе хунă.

Пур колхозсенче те силос хывма тытăннă. Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем çырмасенче тата вăрмансенче ӳсекен куракансене çулса пуçтараççĕ. Çумкуракансемпе хĕвелçаврăнăшсенчен силос хывăççĕ. Чăваш Улхаш колхозĕ — 200 тонна, «Красная звезда» — 45 тонна, «Большевик» — 39 тонна, «Лесной Огонек» колхоз 100 тонна силос хыврĕç. Çавăн пекех, Шупашкар районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах тимлĕн ĕçлерĕç. Колхоз клевер, вика тата улăх утине 702 центнер ытла çулса хатĕрленĕ. Халĕ тата çулçăллă туратсем касса турттараççĕ. Икĕ пахчана выльăх кăшманĕ лартнă тата силос хывăççĕ.

Колхозсенче хатĕрлесе хунă выльăх апачĕсене пăхса усрасси çине уйрăмăнах тимлĕн шăхни кирлĕ. Пĕр килограмм апата та вирĕсĕр салатса шĕтермелле мар. Тума тытăннă çуртйĕрсене хĕле кĕриччен шĕтĕмпех туса шĕтерес пулать.

40 тиха пăхса ӳстернĕ

ЕТĔРНЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Алексей Рыбаков 10 çул ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр аслă конюх пулса ĕçлет. Конюхра ĕçлесси,—тет Рыбаков юлташ,—маншăн чи ответлă та хисеплĕ ĕç пулса тăрать. Лашасене лайăх пăхнăшăн Рыбаков юлташа темиçе хутчен те премисем панă. Унăн аллинчи лашасем яланах мăнтăр тата сывлăхлă. Рыбаков юлташ конюхра ĕçлеме пуçланăранпа 40 тиха пăхса çитĕнтернĕ, вĕсенчен чылайĕшне Хĕрлĕ Çара панă. «Эпĕ пăхса çитĕнтернĕ çамрăк тихасем Хĕрлĕ Çар валли юрăхлă пулнăшăн савăнатăп, тет Рыбаков, мĕншĕн тесен эпĕ пăхса ӳстернĕ тихасем фашистла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкма пулăшаççĕ. Сакă мана татах хавхалантарчĕ, татах ĕçлеме пулăшрĕ».

А. ЧЕХОНИН.

Осоавиахимăн вĕренӳ подразделенийĕсене куллен çирĕплетсе пырар

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлесе, мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшса тăраççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем вăрçă ĕçне пикенсе вĕренеççĕ, кирлĕ вăхăтра алла пăшал тытса тăван çĕршыва çирĕп кăкăрпа тăрса сыхлама хатĕренеççĕ.

Вăрçă кунĕсенче ĕççыннисен вăрçă ĕçне вĕренес хастарлăхĕ татах та ӳсрĕ. Колхозниксем, рабочисем тата интеллигенци хăйсен пуçарăвĕпе пăшалтан тĕл пеме, пулемет тата çар техникипе тактикипе вĕренме группăсемпе командăсем тăваççĕ.

Ишлей районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз членĕсем—осоавиахимовецсем «Ворошиловла стрелоксен» тата «Ворошиловла всадниксен» групписене организацилеççĕ. Осоавиахим организацийĕ Хĕрлĕ Çар валли çар специальноçне илнĕ çынсем чылай вĕрентсе хатĕрленĕ.

Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоза та оборона ĕçĕ лайăх пырать. Алла пăшал тытма пултаракан кашни колхозникех «Ворошиловский стрелок» значокĕн нормине панă. Активлă осоавиахимовец М. Терентьев юлташ халь отечественнăй вăрçăн фронтĕнче ирсĕр фашизма хирĕç пăтăрăн çапăçать. Осоавиахим организацийĕсенче тăрса çар техникине лайăх вĕренсе çитнĕ патриотсем вăрçă фронтĕнче паттăрăн çапăçнă тĕслĕхсене пирĕн республикăра çĕршер ирсе кăтартма пулать.

Осоавиахим Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн боевой резерви пулса тăрать. Çавăнпа та унăн Хĕрлĕ Çар валли пур енĕпе те вĕренсе çитнĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе татах та вăйлăн ĕçлемелле, хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех вăрçă хушнă пек урăхлатса çĕнетмелле.

Осоавиахимăн кашни организацийĕ снайперсем, гранатометчиксем, пулеметчиксем, «Ворошиловский стрелоксем», «Ворошиловский всадниксем», радистсем, телеграфистсем тата ытти çавнашкал çар специалисчĕсем хатĕрлеме панă заданисене ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешмелле.

Ĕççыннисене вăрçă ĕçне вĕрентес ĕçĕн пахалăхне тĕпренех лайăхлатас пулать. Вăрçă çавна тума хушать. Вĕренӳ ĕçне вăрçăри обстановкăсене çывăх туса пымалла. Пирĕн отечественнăй вăрçă фрончĕ валли пур енĕпе те вĕренсе çитнĕ, çар техникипе тактикине лайăх шĕлекен боецсем хатĕрлесе парас пулать.

Вăрçă ĕçне вĕренме тăрăшакан пиншер ĕççыннисене лайăх вĕрентсе хатĕрлеме кирлĕ условисем Осоавиахим организацийĕсен пĕтĕмпех çителĕклĕ. Осоавиахимăн вĕренӳ подразделенийĕсене ĕççыннисен сарлака массине ытларах явăстарни тата вăл подразделенисене çирĕплетсе пыни çеç кирлĕ. Рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин сарлака массине Осоавиахим подразделенийĕсене явăстарса, вĕсене диверсантсене хирĕç кĕрешме, колхоз, предприяти пурлăхне — халăх пурлăхне диверсантсенчен сыхлама вĕрентсе пырас пулать.

Вăрçă пуçланнăранпа вĕренӳ подразделенийĕсенче пысăк улшăнусем пулчĕç. Осоавиахим членĕсем — снайперсем, пулеметчиксем, кавалеристсем, связистсем—пиншер çын фронта туса кайрĕç. Халĕ Осоавиахимăн вĕренӳ подразделенийĕсенче группăсем, командăсем тата отрядсем нихăçанхинчен лайăх ĕçлемелле, вĕсене çирĕплетсе пымалла.

Мирлĕ вăхăтра подразделенисенче Осоавиахим членĕсем çеç вĕреннĕ пулнă. Халĕ ĕнтĕ группăсенче, командăсенче тата отрядсенче алла пăшал тытма пултаракан çынсене пурне те вĕрентмелле.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот валли пысăк резервсем хатĕрлесе тарасси Осоавиахим организацийĕ пĕлсе, активпа пĕрле ĕçленинчен килет. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕренӳ подразделенийĕсенче воспитани ĕçне лайăх лартнинчен, вырăнти пĕтĕм условисемпе пĕлсе усă курнинчен, занятисене çарти пек дисциплина туса хунинчен килет.

Осоавиахимăн подразделенийĕсене ертсе пыракан командирсен кадрне суйласа илсе, вĕсене вĕрентсе хатĕрлесси—группăсене, командăсене тата отрядсене çирĕплетес çĕрте тĕп вырăн йышăнать.

Подразделенисенчи чылай командирсем Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕç. Хăшпĕр çĕрте командирсене уйăрас енĕпе йывăрлăхсем тĕл пулма пултараççĕ. Анчах, ăна сирсе пăрахма май пур.

Командăсемпе группăсене хăшне пĕрне пĕрлештерме пулать. Çапла туни—командирсен кадрĕпе лайăх усă курма май парать. Ĕççыннисене вăрçă ĕçне вĕрентес çĕре запаспа тăракан ватă командирсене, граждан вăрçин участникĕсене тата хĕрлĕ партизансене явăстармалла. Вĕсем ку ĕçре пире хăйсен паха опычĕсене парса пулăшма пултараççĕ. Çавăн пекех, командирсен кадрне çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлессине те организацилес пулать.

Осоавиахимăн вĕренӳ подразделенийĕсен ĕçне çирĕплетсе пырасси оборонăллă обществăсен паян тумалли ĕçĕ пулса тăрать.

М. МИТРОФАНОВ.

Шупашкарти ĕççыннисем воскресник туса пухнă тимĕр-тăмăр.
Е. Цыганов фотоӳкерчĕкĕ.

Колхозниксен ответчĕ

СССР Оборонин Государственнăй Комитечĕн Председателĕ тата пирĕн çулпуç Сталин юлташ тăван çĕршыва хӳтлекĕн шаттăр Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса тăма чĕнсе каланине колхозниксен нумай миллионлă çарĕ государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçланипе ответлет.

Ишлей районĕнчи чылай колхозсем 1941 çулшăн государствăна аванс шучĕпе сӳс-кантăр пама пуçларĕç. Çак кун тĕлне иртнĕ çулхи запаспан кантăр сӳсĕ 24 колхоз, кантăр вăрри 17 колхоз панă. «1-ое августа», «Большевик» колхозсем çак çулшăн кантăр вăрри парса татнă. Октябрьски районĕнче 8 колхоз хăйсен обязательствисене тултарса çитес çулшăн государствăна аш-какай панă. Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз ферми государствăна сĕт памалли çулталăк планне февраль уйăхĕнчех тултарнă. Халĕ вĕсем оборона фондне 5 пин литр сĕт пама йышăннă. Пур фермăсенче те ĕçе вăрçă чухнехи пек улăштарса çĕнетсе, тăшмана хăвăртрах çапса салатма Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ таранах аш-какай, сĕт-çу, çăм парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенчен кулленех «Союзплодоовощторгăн» межрайоннăй конторине пахча-çимĕççем пырса параççĕ. Нăрваш Шăхаль ялсоветне кĕрекен «Восход» тата «Совет» колхозсем (Первомайски р.) государствăна ырăш парса татрĕç. Çавăн пекех «Авангард» колхоз тата 1941 çулшăн государствăна сĕлĕсĕр пуçне пур культурăсене те панă. Аш-какай, çăмарта памалли обязательствăсене тултарнă.

Колхозсемпе пĕрлех, колхозник хуçалăхĕсем те хăйсен парăмĕсене çине тăрсах тултарса пыма тытăнчĕç. Шăхасан районĕнчи «Ударник» колхоз членĕсем ялхуçалăх налогне 1600 тенкĕ, Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 1700 тенкĕ пухса панă. Заем ӳçсине те пĕтĕмпех парса татнă. «Ново-Чурино» колхоз членĕсем (Елчĕк р.) З. Парамонов, Е. Арланов тата В. Смолин, К. Смолин юлташсем 1941 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăм тата çăмарта тарассине пĕтĕмпех тултарнă.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултаракан колхозсем тата колхозăн хуçалăхĕсем ăшшансах пыраççĕ. Вĕсем пурте фашистла вăрăхурахсене кирĕç геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çара кирлĕ таранах ялхуçалăх продукчĕсем парса тăма тăрăшаççĕ.

Çамрăксем комсомола кĕреççĕ

КУСЛАВККА. Çамрăксем хушшинче комсомолецсемпе комсомолкăсем ялanах малти ретре пыраççĕ. Вĕсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче производствăра ĕç нормисене 2—3 хут тата ытларах тултарса, союзра тăван çамрăксене лайăх пример кăтартаççĕ. Вуншар çамрăксем хăйсене комсомол ретне илме ыйтса ВЛКСМ райкомне заявленисем параççĕ. Куславкка комбинатĕнче ĕçлекен призывниксем Н. В. Морсковпа Орлов юлташсем хăйсене комсомол ретне илме ыйтса заявленипанă. Н. В. Морсков юлташ сборщик пулса ĕçлет, сменăри нормăна 150 процент тултарса пырать. Лайăх ĕçленĕшĕн юлашки вăхăтра ăна учетчика куçарнă. Çавнашкалах йывăç каскалакан цехри станочницăсем Крисуновăпа Антонова юлташсем комсомол ретне кĕнĕ. Вĕсем комбинатра малти ретре пыракан çамрăксем, ĕç нормине 200 процент тултараççĕ.

А. ПЕТРОВА.

Укерчĕк çинче (сылтăмран çулахаялла): командирсем Д. П. Филатов, М. П. Старооскольцев, А. Ф. Смирнов тата Л. Е. Левин юлташсем Мускав çывăхĕнче тепсе ӳкернĕ фашистла самолет патĕнче.
М. Рунов фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Тискер-кайăксем Львов урамĕсенче

Илемлĕ Львов хулин урамĕсем тискер кайăксемпе, тăмсайсемпе, вăрă-хурахсемпе, ӳсĕрсемпе тулса ларнă.

Çав куннех, фашистла бандитсем хулана пырса кĕнĕ кунах, Берлинри радио «большевиксен тискерлĕхĕ» çинчен кăшкăрма тытăннă.

Çав кунах фотоӳкерчĕксем пичетлесе кăларнă, вăл ӳкерчĕксенче «хĕрлĕ террор жертвисене», Львов хулинче асаплантарса вĕлернĕ çынсене илсе кăтартнă.

Фашистсем мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ, çав юнлă ĕçе çынсиенсем хăйсем тунă пулсан та, вĕсем «красноармеецсем тунă хăрушă ĕçсем» тесе ӳсĕр пуçпа кăшкăрнă, анчах ăна никам та ĕненмен, ĕненме те пултарайман.

Фашистла бандитсен кивĕ, тахçанах тăрă-шыв çине кăларнă, улталă ĕçĕ. Анчах, ку расра та, фашистсен черетлĕ ирсĕр провокацийĕ саланса кайрĕ.

Оккупациленĕ çĕршывсенче немĕçсем панă укçапа кăларса тăракан пĕчĕк хаçатсем сырнине шута илмесен, çав питĕ те васкавлăн тунă документсем суя пулни çинчен, Геббельс сыннисен ĕçĕ ăнăçлă пулманни çинчен пĕтĕм тĕнчери хаçатсем пĕр шухăшлă пулса сырчĕç.

Фашистсен çав суя ĕçĕ мĕн хака ларнине Львов хулинче пурăнакансем лайăх пĕлеççĕ. Львов хулинчен тарса тухма пултарнă вуншар çынсем каласа панă тăрăх, фашистсем вăл суя фотоӳкерчĕксене мĕнле тунине халĕ ĕнтĕ тĕплĕн палăртнă. Мĕншĕн тесен, вăл çынсем Львов хулинче фашистсем иртĕнсе çӳренине малтанхи кунсенчех хăйсем курса тăнă.

Вĕсем каласа панине тарăхмасăр, лăпкăн итлеме май çук. Художествăлла промысласен Львов хулинчи музейăн сотрудници Ядвига Кнушевская çапла каласа шарт: «Вăл каçхине çĕр тĕттĕм пулчĕ. Хутран-ситрен нимĕçсен ӳçĕр офицерĕсем кăшкăрашни илтĕнчĕ. Чылай çĕрле пулсан та, пирĕн çуртри тата кӳршĕри çынсем сывăрмарĕç. Вĕсем пурте кăнтăрла пулнă ĕçсем çинчен шухăшлаççĕ. Сасартăк кăшкăрашнă сасăсем илтĕнчĕç, çан-çурăм чĕтресе кайрĕ. Пирĕн кӳршĕри çурта штурмовиксен банди пырса кĕнĕ. Кантăксем янраççĕ, пистолетран пенĕ сасăсем илтĕнчĕç. Чӳрече патне пырса вăрттăн пăхнă хыççăн, ура çинче аран тăтăм. Пĕрремĕш хутри чӳречесенчен ӳçĕр салтаксем аялти кĕпе-йĕмсем çеç тăхăннă çынсене кăлара-кăлара ывăтаççĕ. Çавăнтах, çурт умĕнче, офицерсен пысăк ушкăнĕ тăрать. Офицерсем хĕрарăмсен кĕпи-тумтирĕсене туртса çурчĕç, мăшкăлласа кулчĕç. Унтан пурте лăпланчĕç. Пирĕн кӳршĕри çынсене нумайĕшне таçта тĕттĕм урама хăваласа кайрĕç. Пĕр сехет хушшинче пирĕн çурт умĕнчен темиçе ушкăн çынсем иртсе кайрĕç. Арçынсем, хĕрарăмсем ачасене йăтса утаççĕ, вĕсене ӳçĕр салтаксем хăваласа пыраççĕ. Эпир чĕтресе лартăмăр. Тискер банда пирĕн пата та часах пилсе тухать пулĕ тесе кĕтрĕмĕр...»

Львоври государственнăй ипподромра ĕçленĕ рабочи Стефан Коряк милиции вырнаçнă çуртран инçех мар пурăннă. Вăл та, хулари ытти çынсем пекех, çĕрĕпех сывăрман. Стефан Коряк нимĕç салтакĕсем аялти кĕпе-йĕмсене çеç тăхăннă арçынсемпе хĕрарăмсене çĕрĕпех милици пулнă çурта илсе пынине курнă. «Милици карташне пырса кĕнĕ чухне пĕр ӳçĕр офицер çатта-çарамас пекех утса пыракан хĕрачана ярса тытрĕ. Вăл вĕçĕрĕнсе кайса офицера çапса ячĕ. Офицер темĕскер каласа кăшкăрчĕ, çав вăхăтрах салтаксенчен пĕри хĕрачана кăкăрĕнчен штыкпа çапрĕ. Хĕрача мĕскĕнĕн кăшкăрчĕ. Унтан нимĕçсем пирĕн çине кăларнă, ултавлă ĕçĕ. Анчах, ку расра та, фашистсен черетлĕ ирсĕр провокацийĕ саланса кайрĕ.

Оккупациленĕ çĕршывсенче нимĕçсем панă укçапа кăларса тăракан пĕчĕк хаçатсем сырнине шута илмесен, çав питĕ те васкавлăн тунă документсем суя пулни çинчен, Геббельс сыннисен ĕçĕ ăнăçлă пулманни çинчен пĕтĕм тĕнчери хаçатсем пĕр шухăшлă пулса сырчĕç.

Фашистсен çав суя ĕçĕ мĕн хака ларнине Львов хулинче пурăнакансем лайăх пĕлеççĕ. Львов хулинчен тарса тухма пултарнă вуншар çынсем каласа панă тăрăх, фашистсем вăл суя фотоӳкерчĕксене мĕнле тунине халĕ ĕнтĕ тĕплĕн палăртнă. Мĕншĕн тесен, вăл çынсем Львов хулинче фашистсем ирт

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи авиацийĕ Çурçĕр Франци çине икĕ хутчен пырса тапăннă. Сент-Омер çывăхĕнчи чугунçул линийĕсем тата аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Çак операцисем вăхăтĕнче противникăнне 19 истребитель пĕтерсе тăкнă. Брестри доксем çине те бомбăсем пырса пăрахнă.

Августăн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Рур тата Рейн облачĕ çине пырса тапăннă.

Кельн, Дюссельдорф тата Дуисбург çине бомбăсем уйрăмăнах вăйлăн пăрахнă, вĕсем çине пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне Роттердамри тата Остендери доксем çине те бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенчен 13 бомбардировщик хăйсен базисене каялла тавăрăнман.

Çав каçхинех противникăн нумай мар самолечĕсем Хĕвелтухăç Англи тата Шотланди çине бомбăсем пăрахнă. Пунктсенчен пĕринче граждăнла халăхсем хушшинче жертвăсем пур.

Официальнăй даннăйсем тăрăх, юлашки тăватă эрне хушшинче Англи çине Германин 500-тен те сахалрах самолечĕсем вĕçсе пынă. Ку вăл Англи бомбардировщикĕсем августăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи çине вĕçсе пынинчен нумай сахал.

Англи флочĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: çак эрне хушшинче Германин икĕ подводнăй лодкине тата конвой хăтлесе пыракан пĕр транспортне путарнă.

Авиаци Вăтаçĕр тата Сурçĕр тинĕсĕсенче тăшманăн суднисене путарнă, е вăйлăн сиенленĕ, вĕсен водоизмещенийĕ пурĕ 28 пин тонна пулнă.

Англи авиацийĕпе совет авиацийĕ Берлин çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, августăн 17-мĕш. (ТАСС). «Ивнинг стандарт» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: сывлăшран килсе тапăннă пирки час-часах пулакан тревогăсем Берлин çыннисен нервисене канăçсăрлантараççĕ, вĕсем: мĕнле бомбардировщиксем кусем, ăçтан вĕçсе килеççĕ вĕсем тата вĕсем вĕçсе килни вăрçăн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине пĕлтермест-ши тесе ыйтаççĕ. Бомбардировщиксем çавтери çулте вĕçнĕ пирки, вĕсене чи çĕнĕ йышши звукоуловительсем те аран-аран палăртаççĕ. Çакă характерлă: çавнашкал вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра хулара шăпах; Германин зениткисем те немеççĕ, çакă вăл халăха татах та ытларах шăртлантарать.

Германире шикленсе ӳкнĕ

СТОКГОЛЬМ, августăн 16-мĕш. Нимĕç фашисчĕсен войскисене Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапнă пирки Германи халăхĕ хушшинче хăраса, шикленсе ӳкесси тата шанчăксăрлăх кашни кунах ӳссе анлăн сарăлса пырать. Германи сводкисемпе статьисенче ССР Союзне хирĕç кĕрешме йывăрри çинчен час-часах çырма тытăннă.

«Германи халăхĕ,—тесе çырать Швеции «Вестмандланселнс Тиднинг» хаçат, — ывăнса çитнĕ. Унăн вăрçах хастарлăх çук. Кун пирки Германирен килнĕ çыннисем каласа параççĕ. Берлинран килехен хыпарсем те çавăн çинченех каласçĕ. Хаçат çапла кăтартса парать: Германи пропаганди вăйланнине пула «оккупациленĕ облаçсенчи Германи салтакĕсен пурнăçĕ илĕртӳллĕ пулнă, вĕсемшĕн вăрçа похочĕсенче пуласси те ытлашши хăрушах пулман, мĕншĕн тесен ун чухне çухатусем пит сахал пулнă. Анчах ССР Союзне хирĕç вăрçа пуçланă хыççăн пысăк улшăнусем пулнă. Халь ĕнтĕ Германи салтакĕн пурнăçĕшĕн хăрушлăх чылалх ӳсрĕ, ăна вилнисем çинчен хаçатсенче пысăк списоксем пичетлесе кăларнисем те лайăх кăтартса параççĕ. Халĕ ĕнтĕ, — тесе çырать хаçат, — фронта лекесси пит савăнăçлă япалах мар».

Хаçат çапла çырать: шикленсе ӳкес шухăш оккупациленĕ çĕршывсенчи салтаксене те çавăрса илнĕ. «Германи салтакĕн семьине вăл Лондонри тата Ковентри семьесем пекех пулас хăрушлăх хăратать». Юлашкинчен хаçат çапла çырать: Германин вăрçа машини, вырăссен шурлăхĕсене кĕрсе ларнăскер, «çĕнтерӳсем пирки мир тăвассăн çунасси патне» илсе пыма пуláшнĕ.

Швеции тепĕр «Эскильстуна курирен» хаçат, Германире «Дас рейх» хаçата тăрă шыв çине кăларса, халăх хăйĕн шухăшне ăшра тытать тесе çырать. «Дас рейх» хаçат çĕнтерӳсем çинчен калакан хыпарсем çине Германи халăхĕ пачах çавăрăнса пăхмасть темелле, тесе çырнă пулнă. Çавăнпа пĕрлех, «Эскильстуна курирен» хаçат çакăн пек вывод тăвать: «Дас рейх» хаçат çырнă статьяри йĕркесенче Германи халăхĕ «ăшра тытакан шухăш» кĕтмен çĕртен ирĕксĕрех сиоле сиксе тухас хăрушлăх пурри сисĕнет. «Акă мĕн,—тесе çырать хаçат, — нимĕçсен тӳссе тăмалла мар иккен, вĕсен этемĕн туйăмне пытарса пымалла».

«Эребру курирен» хаçат та «Хастарлăхсăр вăрçă» ятлă статьяра çавăн пек выводсемех тăвать. Хаçатăн Берлинри корреспонденчĕсем Германи халăхĕ ывăнса çитни çинчен кăтартса параççĕ. «Германире, — тесе çырать хаçат,— мир тăвас шухăш вăйланса кайнă. Вăрçă пĕтмен-ха, тепĕр кĕркунне çитет, унтан каллех — хăрушă хĕл, тесçĕ нимĕçсем. Сĕнтерӳсемпе пурăнаймăн. Сĕтел çинче çăкăр пулмасан, вĕсем нимĕн те тăмаççĕ. Нимĕçсем тĕнчери иртнĕ вăрçă мĕнпе пĕтнине манман-ха. Ун чухне те малтанах Германин çитĕнӳсем нумай пулнă. Анчах ĕçе юлашки çапăçу татса парать. Вильгельм çĕнтереймерĕ. Нимĕçсем каллех çавăн пек пулса тухассинчен шикленеççĕ».

(ТАСС).

Польша хулисем нимĕçсен аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă

СТАМБУЛ, августăн 16-мĕш. Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, Варшава, Краков тата Польшăри ытти хуласем пĕтĕмпех нимĕçсен хĕвелтухăç фронтĕнчен илсе пынă аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă. Варшава хулинче аманнисене вырнаçтарма уйрăм çынсен хваттерĕсене конфискацилеççĕ, мĕншĕн тесен, госпитальсенче вырăн çук.

(ТАСС).

Рузвельт пичет представителĕсене пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рокленд гавальне (Мэн штатчĕ) пырса çитнĕ «Потомак» яхта çинче Рузвельт пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: хăй вăл Черчилльпе пĕрле иртнĕ канашлу вăхăтĕнче хальхи вăхăтри программăна Совет Союзăн потребноçĕсене кĕртес ыйтăва сӳтсе-явнă. Çавăн чухнех Рузвельт вăрçă валли кирлĕ хăшпĕр материалсене Совет Союзне халех пама май пулатъ, тенĕ. Совет Союзĕ тăшмана хирĕç вăрăм вăхăт хушши çапăçма пултарассине Рузвельт хăй шанса тăнине пĕлтернĕ.

Юнайтед пресс агентстви кăтартнă тăрăх, Рузвельт çапла каласа пĕлтернĕ: вăл хăй Черчилльпе пĕрле иртнĕ канашлура США-па Англи пĕрлепĕри пĕтĕмпех йăнăннă, ку вăл икĕ çĕршывăн ĕçĕсене кирек мĕнле событисен вăхăтĕнче те лайăхрах йĕркелесе пыма май паратъ. Малалла Рузвельт çапла каланă: Англипе США ССР Союзне мĕн май килнĕ таранах пулăшу парса тăрăçĕ. Рузвельт каланă тăрăх, ку канашлу вĕçĕ уйăх каярах пулса иртмелле пулнă, анчах Греции тата Крит çинчи кампанисем пирки ăна тепĕр вăхăта куçарнă.

Рузвельт тата çапла каланă: иртнĕ çĕрле «Потомак» яхта подводнăй лодка тапăнассинчен сыхланса пынă. Анчах ирхине яхта тĕтре ăшĕнче пытаннă.

Рузвельт корреспондентсемпе калаçнă чухне Гопкинс пулнă.

Америка корреспонденчĕсем Гитлер ухмаха ерме тытăнни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Женевăри корреспонденчĕ шанчăклă сведенисем тăрăх çапла пĕлтерет: Гитлерăн личнăй врачĕ Зауэрбрух нумай пулмасть Швейцарире специалист-психиатр доктор Тонниспа тата психолог Юнгпа зарттăн халаçу иртнĕ. Зауэрбрух Юнга çапла каланă: Хĕвелтухăçри фронтра ĕç ăнман пирки Гитлерăн ăсĕ хăвăрт начарланса пырать. Вăрçăн вичĕ эрни хыççăнах Гитлер хĕвелтухăç фронтĕнчен кайнă та, халичченех Берхтесгаденра пурăнать, ăна врачсем асăрхасах тăраççĕ.

Национал-социалистла руководительсем хĕвелтухăç фронтĕнчен хилекен лайăх мар хыпарсене Гитлера пĕлтерме чараççĕ. Ĕçе лайăх пĕлсе тăракан национал-социалистла çынсем Гитлер хĕвелтухăç фронтĕнчен пăрахса кайнине йышăнаççĕ, анчах халĕ вăл ăçта пурăннине кăтартмаççĕ. Америкăри «Лайф» журналăн корреспонденчĕ Лэрд çапла çырать: Гитлер лайăх мар хыпарсене итлеме юратмасть. Ана пăхăнса тăракан çынсем ăна лайăх мар сăмахсем каламаççĕ тата начар хыпарсене пĕлтермеççĕ. Германин официаллă пысăк çыннисене Гитлерпа калаçма йывăрлансах пырать. Хăшпĕр чухне вĕсене хăйсен «фюрерĕпе» тĕл пулма эрни-эрнипе кĕтме тивет.

Гитлерла Германие хирĕç Аргентинăра пулса иртнĕ пысăк демонстрацисем

НЬЮ-ЙОРК, августăн 17-мĕш. (ТАСС). Америкăри агентствăсен тата хаçатсен корреспонденчĕсем Аргентинăра Германие хирĕç халиччен пулман çавтери пысăк демонстрацисем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина столицинче Буэнос-Айресра Германие хирĕле демонстраци пулса иртнĕ, унта 50 пин çын пулнă. Демонстрацисем Германин юнлă фашизмне хирĕç хыттăн протестленине, гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен демократиллĕ çĕршывсемпе пĕр шухăшлă пулас лозунгсемпе иртнĕ. Корреспондент каланă тăрăх, Сталин, Рузвельт тата Черчилль ячĕсене асăнсанах демонстрантсем нумай вăхăт хушши тăвăллăн алă çупнă. Совет Союзне, Англине тата США-на асăнсан демонстрацири çынсем «В» саспаллин символне (фашизма çĕнтерессин символне) палартса шĕвĕр тата вăта пурнисене çĕкленĕ.

Çавăн пекех Сант Фе тата Паран провинцисенче пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ каланă тăрăх, демонстрацине пĕрлех Германие хирĕçле пĕтĕмĕшле забастовка пулса иртнĕ, унта 500 пин çын хутшăннă. Бастовка тăвакансем нимĕçсен аллинче тăракан магазинсене чулсемпе пенĕ, вĕсен суту-илӳ предприятийĕсене хуптарнă. Бастовка тăвакансем Гитлер бандисене хирĕç пыракан кĕрешӳре вĕсем Англипе, США-па пĕр шухăшлă пулнине кăтартса панă.

Сирири хаçат Германия Турци çине пырса тапăнас хăрушлăх çинчен

АНКАРА, августăн 16-мĕш. Бейрутри «Матан» хаçат «Турци умĕнче тăракан хăрушлăх» ятлă статьяра çапла çырать: «Совет войскисем хирĕç тăрса вăйлăн çапăçнă пирки Германи фашисчĕсен планĕсем саланса кайрĕç. Россия çине тапăнни питĕ пăшăрханулăх анăçсăр ĕç пулса тăчĕ, çакăн хыççăн Сывăх Хĕвеланăçĕ умне тухса тăнă хăрушлăх ӳссăн курăнма тытăнчĕ. Ютçĕршывсенчен пынă хыпарсем Гитлер, ССР Союзĕнче йывăрлăхсем çине пырса тăрăннă хыççăн, хăйĕн Россия çине тапăнас çулне улăштарни çинчен каласçĕ. Унăн çĕнĕ çулĕ Дарданелл тата Турци урлă пырать. Нумаях пулмасть эпир нимĕçсем Турци çине тапăнма пăхса хуни çинчен информаци пичетлесе кăларнăччĕ. Вăл информацире малтанласа тăвакан ĕçсем çинчен пĕлтернĕччĕ, çав ĕçсенчен Гитлер атакăна хатĕрленнине курма пулать, ăна пурнăçа кĕртессине вăраха ямасăр тăвĕ».

Юлашкинчен хаçат çапла çырать: Германия Россия çине вăрçăла тухнă хыççăн Сывăхри Хĕвелтухăç çине вăрçăпа тапăнас хăрушлăх вăхăтлăха сирĕлсе кайрĕ тесе шутланăччĕ, халь вăл çĕнĕрен пысăкланса пырать.

(ТАСС).

Вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

ВАРНАР. Уравăшри туллимар вăтам шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленчĕ. Шкул валли 160 кубла метр вутă турттарса хатĕрленĕ. Вутă хума сарай тата шыв вĕретме лаç туса лартнă. Çĕнĕрен 10 парта тунă, киввисене юсанă.

А. КРИСЛОВ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕн пысăк çитĕнĕвĕ

Августăн 17-мĕшĕнче пĕтĕм Совет Союзĕ тăрăх çамрăксемпе комсомолецсен Пĕтĕм Союзри воскресникĕ пулса иртрĕ. Вăл воскресник совет çамрăкĕсен хĕрӳллĕ патриотизмне кăтартса паракан вăйлă демонстраци пулса тăчĕ тата совет çамрăкĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне юн ĕçекен тискер тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕçе пама хатĕррине кăтартса пачĕ. Çамрăксемпе пĕрлех ватă рабочисем, служащисем, инженерсемпе техниксем воскреснике тухса пикенсе ĕçлерĕç. Воскресник участникĕсем августăн 17-мĕшне ĕçĕн пур участокĕсенче те пысăк рекордсем тумалли кун туса хучĕç.

Малтанласа шута илнĕ тăрăх, Мускав хулинче кăна воскресника 600 пин çын ытла хутшăннă.

Харьков хулинче воскресникре 150 пин çын ытла пулнă. Вĕсем мĕнпурĕ пĕр миллион тенкĕ ытла ĕçлесе илнĕ, ăна пĕтĕмпех Тăван çĕршыв оборонин фондне панă.

Сталински облаçĕнче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне 400 пин çын ытла, Чита облаçĕнче—45 пин çын ытла, Ивановăра 10 пин çынна яхăн хутшăннă т. ыт. те.

Ленинградра воскресникре хутшăннă çамрăксем предприятисенче çеç ĕçлемен, вĕсем колхозсенче те ĕçленĕ.

Августăн 17-мĕш. (ТАСС).

Çамрăксен республикăри воскресникĕ

Иртнĕ вырсарникун, августăн 17-мĕшĕнче, комсомолецсемпе çамрăксем оборона фончĕ валли воскресник туса иртторĕç. Вăл воскресникре промышленноçпа транспортри тата ялхуçалăхĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен предприятийĕсенче, колхозсенче ĕçлерĕç.

Учрежденисенче ĕçлекен тата шкулсенче вĕренекен çамрăксемпе комсомолецсем пиншер çын строительство площадкисенче, вăрман касса хатĕрлес, хула урамĕсене йĕркелес çĕрте, пристаньсемпе станцисенче ĕçлерĕç.

Шупашкар хулинче кăна воскресника 5.500 çын хутшăннă. Çамрăксемпе пĕрлех, воскреснике ваттисем те, килхуçи хĕрарăмĕсем те тухса хастарлă ĕçлерĕç.

Канашпа Улатăр хулинчи комсомолĕсемпе çамрăксем вăл кун промышленность предприятийĕсемпе чугунçул çинче ĕçлеме йышлăн тухнă. Канашри чугунçул узелĕнче воскресникре çĕршер çын хутшăннă.

Ишлей районĕн центрĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем 65 çын кунĕпех чугунçул çинче ĕçленĕ. Иштеркассинче (Ишлей р.) воскресникре 161 çын хутшăннă, вĕсем кунĕпех тырă вырнă. Ермакри комсомолецсемпе çамрăксем 17 çын 37,5 ĕçкунĕ тунă, çав ĕçкунĕсем çине тивекен тупăша вĕсем пĕтĕмпех оборона фондне панă.

Çавăн пекех, Чкаловски, Калинински, Шупашкар, Пăрачкав районĕсенче те комсомолецсемпе çамрăксем колхоз уйăхĕсенче йышлăн ĕçленĕ.

Воскресникре ĕçлесе илнĕ укçасене тата тупăшсене пур çĕрте те оборона фондне параççĕ.

* * *

КУКЕÇ, августăн 18-мĕш. Район центрĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен пĕр бригади Киров ячĕпе тăракан колхозра ĕçленĕ. Вăл бригадăра 33 çын пулнă. Бригада колхоза 3 гектар тырă вырса панă. Чылай комсомолецсем хăйсен ĕç нормине ытлашшипех тултарнă. Иккĕмĕш бригада чугунçул çинче ĕçленĕ.

Воскресник пĕтĕм районĕпех аван иртнĕ. Çамрăксем, вĕсемпе пĕрле пионерсемпе ваттисем те, оборона фондне татах та вăйлатас тесе пысăк хастарлăхпа ĕçленĕ.

* * *

ÇЕРПУ, августăн 18-мĕш. Районĕпе мĕнпурĕ воскреснике 920 çын хутшăннă. Вăл шутран комсомолта тăман çамрăксем 344 çын пулнă.

Воскреснике хутшăннисем оборона фончĕ валли 2300 тенкĕлĕх ĕçленĕ, тата 306 ĕçкунĕ тунă.

Уйрăм коллективсене илсен, ялхуçалăх техникумĕпе детгородока палăртса хăвармалла, вĕсем воскресникре 1500 тенкĕлĕх ĕçлесе оборона фондне панă.

Воскресник ăнăçлăн иртрĕ

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ, августăн 18-мĕш. (Телеграфпа). Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ — районри пĕтĕм халăхăн воскресникĕ пулса тăчĕ. Воскреснике пĕтĕмпе 10097 çын хутшăннă, вăл шутран çамрăксем — 1906 çын. Оборона фондне пама 9246 ĕçкунĕ туна, çав фонда 17,8 тонна тĕштирĕ параттăр. Хуçалăхлă организацисенче оборона фончĕ валли 4500 тенкĕлĕх ĕçленĕ.

ВКП(б) райкомĕ — КУЗЬМИН.
ВЛКСМ райкомĕ — БЕЛОВ.

2453 çын тухнă

ÇĔМĔРЛЕ. Августăн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ воскреснике районĕпе 2453 çын хутшăннă. Çак шутран ялта 1302 çын, хулара 1151 çын. Уйрăмăнах комбинатри комсомол организацийĕ воскреснике лайăх организациленĕ.

Воскресникре ĕçлесе илнĕ укçана çĕршыв оборонин фондне панă.

В. МУРАВИН.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ИЕПРЕÇ. Предприятисемпе заводсенче тата ялсенче тимĕр-тăмăр шухас ĕç анлăн сарăлса пырать. Тимĕр-тăмăр шухас ĕçе Хумпуç-Патăръеленче уйрăмăнах лайăх организациленĕ. Кунта тимĕр-тăмăр пухас ĕçе комсомолецсемпе пионерсем кăна мар, коммунистсемпе учительсем те хутшăннă. А. Цветонова учительница 250 килограмм, И. Румянцев учитель 200 килограмм тимĕр-тăмăр пухса панă. Коммунист-учитель А. Альдемасов комсомолецсемпе пĕрле çур тоннăна яхăн тимĕр-тăмăр пухнă.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Сад ешĕрет

Анлă Эскедень шывĕ. Шывăн сылтăм енче—Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозăн сарлака улăхĕ тата çимĕç пахчи. Ку улăхра колхоз çулленех темиçешер тонна симĕс утă, тухăçлă пахча-çимĕçсем пуха илет.

Пуян çав колхозăн уйăрĕ. Тавраллах ăнса пулнă тырпул, пахча-çимĕç.

Колхозăн сад ĕçĕ çĕнĕ япала. Пиллĕк çул каялла çеç-ха сад тума тытăннă. Н. Карпов колхозник тăрăшнипе çамрăк йывăçсем вăйлăн ӳсеççĕ. Улмуççисем хушшине тĕрлĕрен çырла йывăççисем лартнă. Вĕсенчен кăçал 8 центнер таранах çырла пуха илеççĕ.

Колхозăн 4 çулхи улмуççи 180 кăк, икĕ çулхисем—200 кăк, халĕ каллех 12 пин штука вăрă акнă. Çитес кĕркунне шкул пахчине 400 кăк улмуççи лартса пама пăхнă.

С. БАТЬКОВ.

Чăваш артисчĕсен концерчĕсем

КАНАШ. Чăвашсен Академи театрĕн чăваш труппинчи артистсем çак кунсенче вагонсем юсакан заводри клубра тата районри культура çуртĕнче концертсем пачĕç.

Концертсен программине пĕр актлă пьесăсене тата чăваш халăхĕн таписемпе юррисене кĕртнĕ. Кунпа пĕрлех уйрăм артистсем фашизма хирĕç çырнă уйрăм произведенисене вуласа пачĕç.

Т. М.

СПОРТ

Канмалли кун стадионра

Иртнĕ вырсарникун «Медик» спорт обществин стадионĕнче Шупашкартн «Спартак» тата «Динамо» командисем футболла вылярĕç. Хулари малти вырăна тухассишĕн ăмăртса выляна хыççăн спартаковецсем ăмăртсем выляса янăччĕ. Августăн 17-мĕшĕнче пулнă вăйăра та малтанхи таймра «Динамо» футболисчĕсем 3 мяч тапса кĕртрĕç. Иккĕмĕш таймра вăйя спартаковецсем хăйсен аллине илчĕç. Вĕсем «Динамо» алăкне 6 мяч тапса кĕртсе 6:3 шутпа çĕнтерчĕç. Çак вăйăра пухăннă укçа тăван çĕршыв оборонин фондне каять.

Çак кунах стадионра волейболла вылярĕç. 1000 метр дистанцине чупрĕç.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен августăн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информацин Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ çакăн çинчен пĕлтернĕ:

Хĕрлĕ Çара çиçĕмле хăвăртлăхпа аркатмалли плансем поражени тӳсрĕç пулсан, гитлеровецсен хăйсем тытса илнĕ районсенче пурăнакан çынсем çине тайăнас тата вĕсене Совет государствине хирĕç çĕклес планĕсем пушшех те катастрофăлла хăвăртлăхпа арканса кайрĕç вара.

Украинецсемпе вырăс белоэмигранчĕсенчен чи ирсĕр негодяйсем тата авантюристсем, гестапо службинче тăрса Гиммлертан шалу илекенскерсем, нимĕç войскисем Украина тата Белорусси хулисемпе ялĕсене кĕрсенех, вĕсене унта ирĕке кăларакансене кĕтсе илнĕ пек çăкăр-тăварпа кĕтсе илĕç тесе, шантернă.

Анчах Германи войскисем Совет Союзĕн территорийĕ çине кĕнĕ малтанхи кунсенчен пуçласах çав шантарса каланисем пурнăçран мĕн тери аякра тăни палăр пулса тăчĕ. Германи çарĕ Хĕрлĕ Çар паттăрла хирĕç тăнине кăна мар, пĕчĕккинчен пуçласа ватти патне çитиччен мĕнпур ĕççыннисем çавтери хастаррăн хирĕç тăнине тĕлпулчĕ.

Германи Совет Союзĕ çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ пирвайхи кунсенчех çуралнă партизанла движени, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин чĕнсе каланă хыççăн вăйлă çулăмпа çулăмланса çĕкленчĕ, халĕ ĕнтĕ вăл нимĕçсен çарĕ йышăннă районсен мĕнпур талкăшĕнче ялкăшса çунать, неприятелĕн транспортне, çыхăнăвне тата пĕчĕк çар ушкăнĕсене кăна мар, Германин чылаях пысăк çар соединенийĕсене те вĕсен штабĕсемпе пĕрлех сунтарса ярса, кĕл туса хурать. Лозовский юлташ Германи çарĕсен командованийĕ, Германи офицерĕсем тата Германи салтакĕсем партизанла движени çине мĕнле пăхнине кăтартса паракан хăшпĕр фактсене илсе кăтартать.

Германин 18 танковăй дивизине кĕрекен танковăй колонна командирĕн Мельцер майорăн тытса илнĕ донесенийĕнче çапла каланă:

«Юлашки 6 кун хушшинче хамăн чи лайăх çынсенчен, пирĕн таврари ялсене продовольстви тупма автомашинăсемпе япăскерсенченех, 20 çыннине çухатрăм. 23 салтакран 3 çын кăна, вĕсем те нимĕнсĕрех, каялла тавăрăнчĕç; ыттисене партизансем вĕлернĕ е тытăкăна илнĕ. Партизансем пире кăнтăрла та, çĕрле те канăç памаççĕ».

Тытăкăна лекнĕ нимĕç ефрейторĕ Пауль Людвиг çапла кăтартса парать: «Эпир каçса килнĕ пур районсенче те çынсем пире кураймаççĕ, ылханаççĕ. Пур районсенче те партизансен отрячĕсем ĕçлеççĕ... Германи часĕсем парăнма тытăнсанпа партизансем пирĕн çине кашни кун переççĕ. Эпир канăç кураймастпăр», тесе çырать.

Партизанла движени çинчен калакан хыпарсем тыла çитеççĕ, фронтри салтаксен çемьисене хускатаççĕ.

Вальтер Велле салтакăн арăмĕ июлĕн 9-мĕшĕнче хăй упăшки патне çапла çырать:

«Сан çыруран эсир пĕрехмай хăрушлăхра тăни курăнать, мĕншĕн тесен, сирĕн патра партизансем ĕçлеççĕ. Çакă вăл, паллах, фронтринчен те хăрушăрах».

Герберт Гизау ефрейтора унăн арăмĕ Берлинран июлĕн 6-мĕшĕнче çапла çырать:

«Савнă мăшăрăм, партизансем çавăн пек активлă пулни вăл лайăх мар. Вĕсем, эсир тепле сыхăлăхлă пулсан та, сире кĕтесрен пере-пере вĕлерме пултараççĕ».

Партизанла движени сарăлса пыни Германи командованине хускантарать. Июлĕн 20-мĕшĕнче войскăсем патне «партизансем тĕлĕпне мĕнле пулмалли çинчен» калакан, партизанла движение хирĕç кĕрешӳре чи хаяр мерăсем йышăнма хушакан секретлă инструкци ярса панă.

Партизанла движени çавтери пысăккăн сарăлса кайнипе, ун çинчен фашистсен пичетĕпе радион ирĕксĕрех калаçма тытăнма лекнĕ.

Берлинри радио августăн 14-мĕшĕнче, хресченсене партизансене тытса нимĕç çарĕн аллине пама чĕнсе, белоруссен чĕлхипе «аçа та çиçĕмлĕ» передача туса иртторĕ:

«... Кам та кам партизансене пулăшса пырать, эпир вĕсене пĕр хĕрхенӳсĕрех пере-пере пăрахатпăр»,—тесçĕ нимĕçсем.

Паллах, çавăн пек шăрчăкланса çĕтĕлсе кăшкăрни вăл завоевательсен тылне кунран-кун ытларах хăрушлăх кӳрекен партизанла движени фашистла заправилăсене чăрсăрлантарнине тата хăратнине кăтартса парать.

Гитлерла палачсем, хăйсем пыракан çул çинче мĕн чухлĕ ытларах висĕлипăсем лартаççĕ тата мĕн чухлĕ ытларах çынсем пере-пере вĕлереççĕ, партизанла движени çавăн чухлĕ хăвăртрах лăпланать, тесе шухăшлаççĕ. Анчах та çакă вăл гитлеровецсем çĕнĕ йăнăш туни пулать. Партизанла движени—вăл пĕтĕм тарăнăшпех халăх движенийĕ, совет халăхĕпе юнпа тата чунпа çыхăнса тăракан движени. Партизанла движени малалла та ӳссе, аталанса пырĕ, нимĕç оккупантчĕсен транспортне, çыхăнăвне тата пурнăçне пăсса, нимĕç çарĕн тылĕнче вăйлăн çулăмланса тăрĕ.

Партизансем—вĕсем совет патриочĕсем, вĕсем пĕтĕм халăх çине тайăнса тăраççĕ тата халăхпа, Хĕрлĕ Çарпа тăванăн та тарăннăн çыхăнса тăрса, гитлерла бандитсемпе вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешме хăйсене валли вăй илеççĕ.

* * *

Пур корреспондентсене те Германи çарĕн тылĕнчи партизанла движени çинчен калакан тĕплĕ материалсене, çавăн пекех Советлă Армени интеллигецин представителĕсем «пĕтĕм тĕнчери армянсене» чĕнсе каланине валеççĕ панă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

ИТ 5539.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 58 84 п. л.